Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 НОЙАБĔР 22 ЫТЛАРИКУН 268 (5081) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Столовăйсен ĕçне кăтартулă йĕркелер

Совет суту-илӳ организацисен халăх умĕнчи ĕçĕ—хисеплĕ те мухтавлă. Вĕсен ответлă задачи вăл—ĕççыннисемшĕн тăрăшасси, вĕсен пурнăçĕпе йалине лайăхлатма пулăшасси. Партипе правитĕлства суту-илӳ организацисенчен кулленех кирлĕ таварсем, апат-çимĕç таврашсем ытлин-çитлĕнех кӳрсе тăма, столовăйсен ĕçне тимлĕн йĕркелеме ыйтаççĕ.

Столовăйсем, ресторансем, буфетсем тата чайнăйсем суту-илӳ организацисен кулленхи ĕçĕнче пит те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пĕрле апатланас ĕçре Совет Сойузĕнче йулашки çулсенче уйрăмăнах паллă çитĕнӳсем тунă. „Кашнийех пĕлет, апат-çимĕç продукцисем тĕлĕшĕнчен пирĕн халĕ темиçе çул кайарах пулнă пек çитменлĕхсем çук. Ку задачăна епĕр татса патăмăр, ăна ытларах та ытларах ăнаçлăн пурнăçа кĕртсе пыратпăр". (В. М. Молатăв).

Столовăйсем пит те ответлă ĕç туса пыраççĕ. Вĕсенче кашни кун çынсем пинĕ-пинĕпе апатланаççĕ. Халăх тăшманĕсем столовăйсем мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине пĕлнĕ. Фашиссен агенчĕсем—троцкисла-бухаринла, буржуала-националисла бандитсем пĕрле апатланас ĕçе аркатма хăтланнă. Ку тĕлĕшпе вĕсем сахал мар сийен кӳнĕ. Сăтăрла ĕçлесе вĕсем хуласенче, район центрĕсенче столовăйсене нумай хупнă, йурăхсăр апат çитернĕ, ĕççыннисене тарăхтарнă.

Пирĕн республикăра Чăвашсойузпа Чăвашторг системисене кĕрекен столовăйсем пĕтĕмĕшпе 46, буфетсем 32, ресторансем 9, чайнăйсем 5. Тӳрех калас пулать: столовăйсем нумайĕшĕ йапăх ĕçлеççĕ, хăйсен планĕсене тултарса пымаççĕ. Чăвашсойуза пăхăнса тăракан столовăйсем 1938 çулта 10.440 пин тенкĕлĕх апат-çимĕç сутмала пулнă. Вĕсем нойабĕр уйăхĕ тĕлне пĕтĕмпе 7.756 пин тенкĕлĕх кăна сутнă. Мĕнрен килет-ха ку? Сăлтавĕ—пирĕн суту-илӳ организацисем, уйрăмăнах Чăвашсойузпа Чăвашторг, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçленинче.

Халăх тăшманĕсем иртнĕ çулсенче Шупашкарта 12 столовăй хупнă пулнă. Сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес майпа кăçал Шупашкарта 6 столовăй уçмала пулнă. Пĕрне те уçман. Чăвашторгăн та, Чăвашсойузăн та столовăйĕсем пахча-çимĕç таврашĕсене хĕл каçмалăх хатĕрлесе хуман. Чăвашторгăн Çĕмĕрлери столовăйĕн кăçал 500 тоннă купăста хатĕрлемеле пулнă, 15 тоннă кăна хатĕрленĕ. Ытти çимĕçсем тăрăх та çавăн пекех. Çĕрулми 500 тоннă хатĕрлес вырăнне 160 тоннă çеç хатĕрлесе хунă. 70 тоннă хăйар хатĕрлемеле пулнă пулсан, 22 тоннă кăна хатĕрленĕ.

Столовăйсен тĕп çитменлĕхĕсенчен пĕри—вăл пĕçернĕ апат-çимĕçсен пахалăхĕ начарри. Совет çыннисем тухăçлă ĕçлеççĕ, пуйан та куљтурăллă пурăнаççĕ. Вĕсем столовăйсенче тутлă та тутă тытакан апат-çимĕç ыйтма тивĕç. Çакна суту-илӳ организацисен руководителĕсем халĕ те ăнланса илесшĕн мар. Столовăйсен пуçлăхĕсенчен хăшĕ-пĕрисем пайан кун та çапла сӳпĕлтетеççĕ:

— Йурать, çийĕç-çке, пирĕн çынсем—йака пырсем мар, уйăса тăмаççĕ, мĕн паран çавна çийеççĕ, тиркемеççĕ,—теççĕ. Çакăн пек шутланине пула, столовăйсен пуçлăхĕсем йулхавланса ĕçленине пула ĕнтĕ, чылай столовăйсенче менӳсем питех те чухăн, йашкапа котлетсăр пуçне нимех те суйласа илме çук. Ку тĕлĕшпе Елĕк, Ишлей, Кӳкеç, Катраç столовăйĕсем уйрăмăнах начар ĕçленине палăртма кирлĕ. Ишлей столовăйĕнче пĕрремĕш бљудă йулашки вăхăтра тăтăшах пĕр апат—лапша йашки пама пуçларĕç. Столовăй пуçлăхĕ Пардасăв йулташ ĕçе йусама тăрăшмасть. Елĕк столовăйĕнче те тутлă апат пĕçерме пĕлмеççĕ. Çав вăхăтрах апат-çимĕç хакĕсене хăпартаççĕ. Столовăйра таса мар. Шупашкар столовăйĕсенче (Гостиницăра, Хресчен çуртĕнче) аш-какайлă апатсăр пуçне урăх нимĕн те çук. Çакăн пекех ытти районри нумай столовăйсенче те. Апатланакансем валљи пулă, сĕт таврашĕнчен, пахча-çимĕçĕнчен тунă апатсем, вегетариански бљудăсем тата ытти тĕрлĕрен апат-çимĕçсем хатĕрлемеççĕ.

Лайăх столовăйра йашка таврашĕ сахалтан та 4—5 тĕслĕ, иккĕмĕш бљудă 7—8 тĕслĕ, порционнăйсем 10 — 15 тĕслĕ пулаççĕ. Лайăх столовăйсен буфечĕсенче йуратса хатĕрленĕ тĕрлĕ закускăсем кăмăла илĕртеççĕ. Кирек-камăн та ытараймасăр çийес килĕ. Шел, апат-çимĕç продукти çителĕклĕ пулсан та, пирĕн столовăйсем нумайĕшĕ çакăн пек лайăх апатсем ĕçхалăх валљи пĕçерсе пама пултараймаççĕ.

Апат-çимĕç пахалăхне ӳстересси—столовăйсен чи пысăк ответлă та хисеплĕ задачи пулать. Çавăнпа пĕрлех столовăйсен куљтурлăхĕ çине те тимлĕн пăхни кирлĕ. Чылай çĕрте столовăйсем ним илемсĕр, таса мар, сивĕ. Канашри вакунсем йусакан савăтăн столовăйĕ ишĕлес пек тăрать, çурри йусанă, çурри йусаман. Чылай столовăйсенче, сăмахран, Ишлейра, тарелкăсем, вилкăсем çитмеççĕ. Улатăр, Шăхасан, Сĕнтĕрвăрри, Трак столовăйĕсенче стакансем çук. Столовăйсен пӳлĕмĕсене илемлетме, йусама, чашăк-тирĕксем туйанма укçа-тенкĕ çителĕклĕ параççĕ. Айăпĕ укçа çитменнинче мар, панă укçа-тенкĕпе усă курманнинче. Чăвашсойуз столовăйĕсем валљи виççĕмĕш кварталта 24.000 тенкĕ уйăрса панă, вăл хисепрен 4.300 тенкипе кăна усă курнă.

Пур çĕрте те ĕçĕн ăнăçлăхне кадрсем татса параççĕ. Çавăн пекех пĕрле апатланас ĕçре те. Столовăйсенче лайăх, стахановла ĕçлекен повăрсем, официанткăсем, кухња работникĕсем сахал мар. Куславккари ресторанра ĕçлекен официантка Надеждă Филиппăва хăйĕн планне 150 процент тултарса пырать. Çынсене лайăх кăмăллăн пăхать. Çавăн пек Хĕрлĕ Чутайри столовăйсенчи официанткăсем те хăйсен ĕçне йуратса тăваççĕ. Суту-илӳ организацисен руководителĕсем çак ĕçри стахановецсене, ударниксене курмаççĕ, вĕсен паха тĕслĕхĕсене ытти столовăйсене куçармаççĕ—çакăнта ĕнтĕ чăрмав. Суту-илӳ организацисен пĕрле апатланас ĕçри кадрсем çине уйрăмăнах тимлĕн пăхас пулать. Вĕсен пурнăçне лайăхлатасси, вĕсене политикăлă воспитани парасси—партипе совет организацисен кулленхи ĕçĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăмала. Столовăйсен ĕçĕнче партипе совет тата профсойузăн вырăнти организацисем ĕççыннисен пурнăçпа йала условисене лайăхлатма мĕнле тăрăшни аван курăнса тăрать.

Ĕççыннисем столовăйсен апат-çимĕç пахалăхне лайăхлатма ыйтаççĕ. Столовăйсем паха-кăтартулă ĕçлеччĕр, ĕççыннисем мĕнле апат-çимĕç ыйтнине, вĕсен кăмăлне шута илсе ĕçлеччĕр. Столовăйсенче куљтурлăх, йĕркелĕх тивĕçлĕ вырăнта пултăр.

ПĔЛТЕРНИ

Пайан, нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, кинотеатр çуртĕнче ПСК(б)П Шупашкар хула организацинчи партактивăн пухăвĕ пулать.

КУН ЙĔРКИ:

1. ПСК(б)П Тĕпкомĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен йышăннă постановлени—докладчик Волкăв йулташ.

Пухăва пропускпа кĕртеççĕ, пропусксене партком çекретарĕсемпе парторгсен ПСК(б)П хула комитетĕнче илмеле.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

Австрири рабочисен фашисăма хирĕçле выступленийĕ

Венăран пĕлтернĕ тăрăх, темиçе кун кайарах Австрири икĕ хулара ĕççĕр тăрса йулнисен фашисăма хирĕçле пысăк выступленийĕсем пулса иртнĕ, ĕççĕр тăрса йулнисем фашисла влаççем ирĕксĕрлесе ĕçлеттермели ĕçе йарасси çинчен кăларнă распорйаженине пăхăнман, ăна хирĕç тăнă. Тарăхса çитнĕ рабочисем фашисла „ĕç управленин" çуртне çĕмĕрсе тăкнă. (ТАСС).

Парижри пысăк митинг

Нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче Парижра питĕ пысăк митинг пулнă, ăна коммунисла парти республикăлă Испанирен таврăннă интернационаллă бригадăсен бойецĕсене чысласа организациленĕ. Митингра ĕççыннисем 30 пин çын ытла пулнă, вĕсем бойецсене тăвăллă овацисем туса саламланă. Митинга пынă Андре Мартине тата интернационаллă бригадăсен бойецĕсене „Марсельеза" тата „Интернационал" йурласа кĕтсе илнĕ.

Митинга пухăннисем: республикăлă Испанийе пăвса вĕлерме чарас шутпа пĕтĕм вăйа хурса тăрăшатпăр, ăна апат-çимĕç, тумтир тата медицинă хатĕрĕсем йарса парса пулăшассине вăйлататпăр, тесе чаплăн тупа тунă. Митинга пухăннисем çавăн пекех тата Франци правитĕлстви йышăннă чрезвычайлă декретсене пăрахăçа кăларассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешме, халăх кăмăлне пурнăçа кĕртсе пыракан правитĕлства туса хурассишĕн кĕрешме сăмах панă. (ТАСС).

—o—

Фашисла погромщиксем йеврей халăхĕнчен мăшкăлаççĕ

Германи фашисĕсем тата Чехословакин чикĕри влаçĕсем Судет облаçĕнчен тарнă йеврейсенчен мăшкăлани çинчен Чехословаки пичечĕ çĕнĕ фактсем илсе кăтартать.

Çак кунсенче Германи салтакĕсен отрйачĕ Чехословаки чикки хĕррине алла-утмăл йеврейе илсе пынă та вĕсене, персе вĕлерессипе хăратса, Чехословаки территорийĕ çине каçса кайма хушнă. Хăвалаçа кăларса йанă çынсен уйрăм-уйрăм пайĕсем, пысăк асапсем курса, Чехословакин чикĕри Домашлице хулине тата чикĕри ытти пунктсене çитнĕ. Анчах унти вырăнти полици влаçĕсем вĕсенчен вунвиççĕшне арĕсленĕ те кайала Германийе кайакан пойăс çине лартнă. Тӳсме çук тертленсе çитнĕ темиçе вăтă йеврей рељсăсем çине выртнă та, епĕр Германийе каймастпăр, тенĕ. Анчах Чехословаки жандармĕсем вĕсене вăйпах вакунсем çине лартса, фашисла Германийе кăларса йанă. (ТАСС).

—o—

Германи халăхĕ çилленсе тарăхни

Швейцари хаçачĕсен Берлинри корреспонденчĕсем çапла пĕлтереççĕ: фашиссем йеврейсене хирĕç погромсем тунă пирки Германи халăхĕ çилленсе тарăхасси ӳссех пырать. Хаçатсенчен пĕрин çинче Германири „Халăх фрончĕн тусĕсем" йатлă вăрттăн ĕçлекен организаци калана сăмахсене пичетлесе кăларнă. Унта çапла калана: „Германири фашиссем йеврейсене хирĕç тискер погромсем тунишĕн Германи халăхĕ нимĕн чухлĕ те ответлă мар. Вăл погромсене Германи халăхĕ хутшăнман, фашиссем Германийе çĕнĕ намăслă ĕçпе варалана пирки Германи халăхĕ ытти пĕтĕм халăхсемпе пĕрле çилленсе тарăхать".

Германири йеврейсене хирĕç тăвакан погромсем пирки пĕтĕм тĕнчере мĕн çырни çинчен фашиссен хаçачĕсем нимĕн те шарламаççĕ. Фашисла влаççем Англипе Франци хаçачĕсене Германине илсе пыма чарнă. (ТАСС).

—o—

Францири интеллигенци Даладйе патне йанă çыру

ПАРИЖ, нойабĕрĕн 20-мĕш. Францири политикăлă ĕçпе обшчĕствăлă ĕçĕн дейателĕсен, ăслăлăхпа литература представителĕсен чылай пысăк ушкăнĕ Даладйе патне çыру йанă, вăл çырура: „Республикăлă Испани правитĕлстви йут çĕршывсенчен хăйсен ирĕкĕпе пынă çынсене пĕтĕмĕшпех çартан чĕнсе илме пĕр нимĕнле условисĕрех йышăнни, ăна кĕске вăхăтрах пурнăçа кĕртни, Испани проблемине хăвăрт татса памали чиперĕс çул пулса тăрать. Йут çĕршывсен Франко генерал патĕнче службăра тăракан салтакĕсене, техникĕсемпе специалисĕсене Испанирен çывăх вăхăтрах пĕтĕмĕшпех нимĕнле услови те кăларса тăратмасăр, илсе каймала тесе шутлатпăр епĕр. Çапла чĕнсе илни мир интересĕсене, Францин хăрушăсăрлăхне сийенлеме пултаракан компенсацисем памали сăлтав пулса тăма тивĕç мар, тесе шутлатпăр",—тенĕ.

✶—o—✶

Литва президентне суйлани

КАУНАС, нойабĕрĕн 20-мĕш. Литвара президент суйлавĕсем пулса иртнĕ. Литва президентне уйрăм çынсен (пурĕ 120 çын) пухăвĕнче суйлаççĕ. Литва президенчĕ пулма çĕнĕрен çичĕ çуллăх срука Антанас Сметонăна (халиччен пулнă президент) суйлана. Ăна суйлассишĕн 120 çынтан 118 çын сасăлана.

Сметонă—влаçа тытса тăракан националиссен партине пуçласа йараканĕ тата унăн пуçлăхĕ.

—o—

Кољцовка колхозĕ хăйĕн йубилейĕ умĕн

ВĂРНАР. Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Кољцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсен аслă пухăвĕ пулса иртрĕ. Çак пухура ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕ Совет Сойузĕн Геройĕ Петр Иванăвич Пумпур йулташ пулчĕ. Пуху йалхуçалăхĕн 1938 çулти итогĕсем тата тупăшсене валеçесси çинчен колхоз председателĕн Жарков йулташăн докладне итлерĕ.

Кăçал йалхуçалăхĕшĕн çу килĕшӳлĕ пулмарĕ пулсан та Кољцовкă колхозĕ иртнĕ çулсенчен кайах мар тырпул туса илчĕ. Вăтамăн кашни гектар çинчен 15 центнĕр тырă илнĕ шутлавать. Уйрăм куљтурăсем тăрăх сĕлĕ 17,6 центнĕр, урпа 17 центнĕр, ыраш 16 центнĕр тухнă.

Колхоз государствă умĕнчи пур обйазательствăсене те тултарнă. Государствăран ссудă илнĕ 46 пин тенкĕ укçана йалтах парса татнă.

Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ хушнă пек, государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарнă хыççăнах, çитес çуракинче акма вăрлăх, вăрлăх страхфончĕ тата выљăх-чĕрлĕхсене çăва тухиччен çитермелĕх тырă уйăрса хунă. Ертел пухăвĕ йышăннă тăрăх, инвалидсене пулăшма 25 центнĕр тырă уйăрнă.

Фондсене хывса çитернĕ хыççăн йулнă тырпулпа укçа-тенкĕне ĕç кунĕсем тăрăх колхозниксене валеçсе параççĕ. Пĕр ĕçкунĕ пуçне 5,5 килограм тĕштырă тата 90 пус укçа тивет. Çапла, кăçал çанталăк уйăр тăчĕ пулин те Кољцовкă колхозникĕсем нумайĕшĕ 200—300-шер пăт тырă илеççĕ. Сăмахран, Йефим Васильĕвич Йерошин çемйи 346 пăт тырă, 905 тенкĕ укçа илет.

Çак пухурах Кољцовкăра колхоз организациленĕ 10 çул тултарнине нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче, Советсен Пĕтĕм Сойузри Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕ уçăлнă кун уйавлама йышăнчĕ. Пуху хупăнас умĕн ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Совет Сойузĕн Геройĕ П. И. Пумпур йулташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Пумпур йулташ Сталин йачĕпе тăракан колхоз организацие хуçалăх йенчен тĕреклĕ пыни çинчен, колхозниксем пуйан та куљтурăллă пурнăç çулĕ çине çирĕппĕнех тăни çинчен каларĕ. Кунпа пĕрлех, вăл колхозăн ĕçри çитменлĕхсене палăртса, çав çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерме сĕнчĕ. Колхозниксем Пумпур йулташ сĕнӳне пĕтĕм кăмăлпа йышăнчĕç.

Кољцовкă колхозникĕсем халљ хĕрсех колхоз йубилейне хатĕрленеççĕ. Йалхуçалăх машинисене сĕрсе сарайне кĕртсе лартаççĕ, йусаттармалисене йусаттараççĕ, урам хушшинче електричĕства пралукĕ карма çĕнĕ йупасем лартаççĕ, выљăх витисене ăшăтаççĕ, кил хушшисене тасатаççĕ.

М. Казаков.

Нина Николайĕвнă МЙАÇНИКОВĂ

Канашри вакунсем йусакан савăт столовăйĕнче ĕçлекен официантка-стахановка, нормăна 170 процент тултарать.

К. Бабайĕв фото-ӳкерчĕкĕ.

Харькăври рабочисем тăван çĕршыва паттăрăн сыхлакансене парнелеççĕ

Ворошилăв йулташ Харькăври трактăр савăтĕнчи рабочисен коллективĕ патне йанă телеграммă

ХАРЬКĂВ, нойабĕрĕн 19-мĕш. („Правда" корреспонденчĕ). Нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче Харькăври Орджоникидзе йачĕпе тăракан трактăр савăтĕнчи стахановецсемпе ударниксен савăтри конференцийĕ пулса иртнĕ. Вăл конференци тăван çĕршыва паттăрăн сыхлакансене—Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусен участникĕсене наградалама савăт коллективĕнчен парнесем—сакăр ылттăн сехет йышăнма ыйтса, Оборонă Халăх Комиссарĕ Ворошилăв йулташ патне çыру йанă пулнă.

Пайан савăт коллективĕ Халăх Комиссарĕнчен ответ илчĕ. Савăтри стахановецсемпе ударниксен конференци президиумне йанă телеграммăра Ворошилăв йулташ çапла çырнă:

„Хаклă йулташсем! Харькăври трактăр савăтĕнче ĕçлекенсен коллективĕ йачĕпе Хасан кӳлли патĕнче пулнă çапăçусен участникĕсене ылттăн сехетсем парса наградаласси çинчен панă сирĕн сĕнĕве ыра сунса йышăнатăп.

Çак йенĕпе уйăрса хунă сакăр штук ылттăн сехете Оборонă Халăх Комиссариат ĕçĕсен управленине йарса пама ыйтатăп, ун хыççăн, пĕрремĕш армин Çар совечĕпе килĕшсе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тăрăх приказ кăларса вăл сехетсене Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусен участникĕсене—чи лайăх бойецсемпе командирсене сирĕн йатпа парса наградалатпăр.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ—рабочи класăн тата пĕтĕм халăхăн уйăралми пайĕ. Çавăнта ĕнтĕ пирĕн çаран вăйĕ тата пирĕн çĕршыв çĕнтерĕвĕн шанчăкĕ.

Салам. К. Ворошилăв".

(„Правда" хаçат, нойабĕрĕн 20-мĕш).

—o◆o—

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Халăх хушшинче ытларах пулмала

СĔНТĔРВĂРРИ. Районра çĕрулми хатĕрлес ĕç начар пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл—районри актива кирлĕ таран мобилизацилеменни пулать. Çавăнпа та, район çĕрулми хатĕрлевĕнче кайа йулнă.

Районри партипе совет тата хатĕрлев организацисенче ĕçлекен работниксем кулленех йалсенче пулаççĕ. Анчах, вĕсем йалсене пырсан ытларах йалсоветпа колхоз канцељарисенче ларса вăхăта ирттереççĕ, халăх хушшинче питĕ сахал пулаççĕ. Кутемер, Тукаш тата Малти Шĕнерпуç йалсовечĕсенчи колхозниксемпе йединоличниксем государствăна халичченех те пĕр килограм çĕрулми паман. Кунта килсе курмаççĕ.

Паллах, районра государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарас йенĕпе лайăх ĕçлекен колхозсемпе йалсем те сахал мар. 28 колхоз тата Водолейĕвă йалсоветĕнчи йединоличниксем йăлтах çĕрулми парса татнă. Ытти колхозсемпе йалсен те пĕтĕм вăйа государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарас ĕçе хумала.

Г. Гиндейĕв.

1938 çулшăн государствăна çĕрулми тăратмали плана мĕнле тултарнийе кăтартаракан СВОДКĂ.

(Нойабĕрĕн 21-мĕшне, процентпа).

Улатăр	83,9
Елĕк	96,7
Патăрйел	46,6
Вăрнар	80,9
Йĕпреç	64,7
Ишлей	62,6
Канаш	53,9
Куславкка	50,9
Хĕрлĕ Чутай	42,0
Кувакина	47,6
Сĕнтĕрвăрри	61,7
Пăрачкав	60,0
Турхан	59,1
Тутаркас	90,5
Трак	60,7
Вăрмар	38,3
Çĕрпӳ	43,4
Шупашкар	75,9
Шăмăршă	54,0
Шăхасан	76,9
Шăнкăртам	80,0
Çĕмĕрле	63,8
Йетĕрне	64,3
Йелчĕк	67,8
Тăвай	78,4

Республикĕпе 62,2.

ЫТЛАШШИ ТЫРĂНА ГОСУДАРСТВĂНА СУТАÇÇĔ

КУСЛАВККА (телефон тăрăх, хамăр корр.). Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче Камаркка колхозникĕсем государствăна 40 центнĕр урпа сутма йышăнса Куславккари йалпо-па договăр турĕç. Колхозниксен пухăвĕсенче государствăна тырă сутма йышăннă колхозсем татах та пур. Аманакри „Динамо" колхоз 22 тонна. Чăнкассинчи „..." Калинин йачĕпе тăракан колхоз 11 тоннă, Иљменкассинчи „Кзыл куч" колхоз 7 тоннă, Пăкăш колхозĕ 7.5 тоннă, Минкĕш колхозĕ 15 тоннă сутма йышăннă.

МРАЊКА.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

КĔСКЕ КУРС.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакцилене. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

X СЫПĂК

БОЉШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ ÇĔРШЫВА СОЦИАЛИСĂМЛĂ ИНДУСТРИЛЕССИШĔН ПЫНĂ КĔРЕШЎРЕ

(1926—1929 çулсем)

1. Социалисăмлă индустрилес тапхăрти йăвăрлăхсем тата вĕсемпе кĕрешни. Партине хирĕçле троцкисла-зиновйĕвла блока туса хуни. Блокăн совета хирĕçле выступленийĕсем. Блока парăнтарни.

XIV сьес хыççăн парти Совет влаçĕн çĕршыва социалисăмлă индустрилесси çинчен панă тĕп установкине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешў сарса йанă.

Хуçалăха ура çине тăратнă тапхăрта задачă, нимрен малтан, йалхуçалăхне чĕртсе йарассинче, йалхуçалăхĕнчен чĕртавар, продовољстви илсе промышлĕннăçа ура çине тăратассинче, халиччен пулнă савăтсемпе хапрăксене ура çине тăратассинче,—хута йарассинче пулнă.

Совет влаçĕ çак задачăсене чылай çăмăллăн ĕçе кĕртнĕ.

Анчах хуçалăха ура çине тăратас тапхăрăн виçĕ пысăк çитменлĕх пулнă.

Пĕрремĕшĕнчен, ун ĕçĕ часах стройран тухма пултарнă кивĕ савăтсемпе тата хапрăксемпе, вĕсен кивĕ, кайа йулнă техникипе çыхăнса тăнă. Задачă—вĕсене çĕнĕ техникă никĕсĕ çинче оборудованисемпе çĕнетсе тухасси пулнă.

Иккĕмĕшĕнчен, хуçалăха ура çине тăратас тапхăрăн ĕçĕ ытла тă хĕсĕк никĕслĕ промышлĕннăçпа çыхăнса тăнă, мĕншĕн тесен ун чухнехи савăтсемпе, хапрăксем шутĕнче çĕршыва питех те кирлĕ машинă тăвакан вуншар та çĕршер савăтсем пулман, ун чухне вĕсем пирĕн пулман, вĕсене туса лартмала пулнă, мĕншĕн тесен çавăн пек савăтсем пулмасан, индустри те чăн-чăн индустри вырăнне шутланма пултараймаст̆. Задачă—çав савăтсене тăвасси тата вĕсене кучухнехи техникăпа хĕçпăшаллантарасси пулнă.

Виççĕмĕшĕнчен, хуçалăха ура çине тăратас тапхăрăн ĕçĕ пуринчен ытларах çăмăл индустрипе çыхăнса тăнă, вăл çав индустрине аталантарса çул çине кăларнă. Анчах çăмăл индустрин аталанăвĕ хăй те малашне йăвăр индустри вăйсăрлăхĕ çине пырса тăрăнма пуçланă, çĕршыва ытти йенчен кирлисем çинчен каламасăр та паллă, вĕсене аталаннă йăвăр индустри çеç çурăçтарса пыма пултарнă. Задачă—вăйхăвата халĕ йăвăр индустрине аталантарасси çине ытларах хурассинче пулнă.

Çак çĕнĕ задачăсене пурне те социалисăмлă индустрилес политикăн татса памала пулнă.

Индустрийĕн патша Российĕнче пулман чылай отрăçлисене çĕнĕрен тумала пулнă,—машинă тăвакан, станоксем тăвакан, автомобилсем тăвакан, хими, металл шăратакан çĕнĕ савăтсем тумала пулнă, хамăр патăртах двигателсем тата електростанцисем валљи кирлĕ оборудовани тăвассине йĕркелесе йамала пулнă, металлпа çĕркăмрăкĕ кăларассине ўстермеле пулнă, мĕншĕн тесен çакна тума ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерес ĕç хушнă.

Çĕнĕ оборонă промышлĕннăçĕ тумала пулнă,—артиллери, снарйад, авиаци, танк, пулемет тăвакан çĕнĕ савăтсем туса лартмала пулнă, мĕншĕн тесен çакна тума капиталисăмлă йĕритавралăх обстановкинчи ССР Сойузĕн оборонă интересĕсем хушнă.

Трактăр савăчĕсем, кучухнехи йалхуçалăх машинĕсем тăвакан савăтсем туса лартмала пулнă, вĕсен продукцине, хресченсен мĕллйуншар уйрăм вак хуçалăхĕсене шултра колхоз производствине куçма май парас тесе, йалхуçалăхне памала пулнă, мĕншĕн тесен çакна тума социалисăм йалта çĕнтерессин интересĕсем хушнă.

Çаксене пурне те индустрилес политикăн памала пулнă, мĕншĕн тесен çĕршыва социалисăмлă индустрилесси çакăнта пулнă.

Паллах, çавăн пек пысăк капиталљнăй строителства темиçе миллиард укçа-тенкĕ хывмасăр пулма пултарайман. Çĕршыв тулашĕнчен займсем илессине шанма май пулман, мĕншĕн тесен капиталисăмлă çĕршывсем займсем пама килĕшмен. Строителства ĕçне çĕршыв тулашĕнчен пулăшу илмесĕр, хамăрăн средствăсемпех тумала пулнă. Пирĕн çĕршыв ун чухне пуйан пулман-ха.

Çакăнта пулнă ĕнтĕ халĕ тĕп йăвăрлăхсенчен пĕри.

Капиталисла çĕршывсем йалљнах хăйсен йăвăр индустрине çĕршыв тулашĕнчен килнĕ укçа-тенкĕпе: колонисене çаратнипе, парăнтарнă халăхсенчен илнĕ контрибуципе, çĕршыв тулашĕнчен илнĕ займсемпе туса пынă. Советсен çĕршывĕ индустриализаци валљи—колонисенчи йе парăнтарнă халăхсене çаратнипе укçа-тенкĕ илмели ирсĕр çăлкуçĕсемпе усă курасси патне пыма принципиаљнă пултарайман. Çĕршыв тулашĕнчи займсем çинчен калас пулсан, ССР Сойузĕшĕн çак çăлкуçĕ, капиталисăмла çĕршывсем ăна займ пама килĕшмен пирки, хупă пулнă. Укçа-тенкĕ çĕршыв ăшĕнче тупмала пулнă.

ССР Сойузĕнче çавăн пек укçа-тенкĕ тупăннă та. ССР Сойузĕнче пĕр капиталисăмлă государствă та пĕлмен перекетлĕх çăлкуçĕсем тупăннă. Совет государстви Октаберти социалисăмлă револљуци мĕн пур хапрăксемпе савăтсене, мĕн пур çĕрсене,—капиталиссенчен тата помещиксенчен туртса илнĕскерсене,—транспăрта, банксене, шалтипе тулти суту-илĕве хăйĕн аллине илнĕ. Государствăн хапрăкĕсемпе савăчĕсенчен, транспăртран, суту-илўрен, банксенчен килекен услам халĕ капиталиссен харам-пырла класне тăрантарма мар, промышлĕннăçа малала сарса пырас ĕçе кайнă.

Совет влаçĕ патша парăмĕсене пăрахăçа кăларнă, вăл парăмсем тăрăх халăх çулсерен процентсем тăрăх кăна çĕршер миллион тенкĕ ытăнпа тўлесе тăнă. Çĕр помещиксен харпăрлăхĕ пулса тăнине пĕтерсе, Совет влаçĕ хресченсене çулсерен ытăнпа 500 миллион тенкĕне йахăн çĕршĕн помещиксене арендă укçи тўлесе тăрассинчен хăтарнă. Çав мĕн пур йăвăрлăхран хăтăлса, хресченсем государствăна çĕнĕ, хăватлă промышлĕннăç тумашкăн пулăшма пултарнă. Хресченсем трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсем илессишĕн питех те интересленнĕ.

Çав тупăш çăлкуçĕсем пурте Совет государстви аллинче пулнă. Вĕсем йăвăр индустри тума çĕршер миллион тата миллиардшар тенкĕ укçа пама пултарнă. Ĕç çине хуçалăхла пăхни кăна кирлĕ пулнă тата укçа-тенкĕсене расходлас ĕçре чи çирĕп перекетлĕх тумала пулнă, производствăна рационализаци тумала, производствăн хăйне ларакан хакне чакармала, кирлĕ мар расходсене пĕтермеле пулнă т. ыт. те.

Совет влаçĕ шăпах çапла тунă та ĕнтĕ.

Перекетлĕх режимне пула кашни çултах капиталљнăй строителства валљи средствăсем ытларах та ытларах пухăнса пынă. Днепровски гидроелектростанцине, Туркестанпа Çĕпĕр хушшинчи чукунçула, Сталинградри трактăр савăтне, станок тăвакан савăтсене, автомобиљ савăчĕсене „АМО“ („ЗИС“) т. ыт. çавăн пек гигантла предприйатисене тума май тухса тăнă.

1926—27 çулта промышленнăçа 1 миллиард тенкĕне йахăн хывнă пулсан, тепĕр виçĕ çултан вара 5 миллиард тенке йахăн хывма май килнĕ.

Индустрилес ĕç малала пынă.

ССР Сойузĕн социалисăмлă хуçалăхĕ çирĕпленсе пынинче капиталисăмлă çĕршывсем капиталисăмлă çиçтемă тытăнса тăрассишĕн хăрушлăх пулнине курнă. Çавăнпа империалисăмлă правителствăсем ССР Сойузне çĕнĕрен хĕстерес, хăратса пăтраштарса йарас, ССР Сойузне индустрилес ĕçе пĕтерсе хурас йе, сахалтан та, чарса лартас тесе мĕн тума пултарнине пурне те тунă.

1927 çулти май уйăхĕнче правителствăра ларнă Англи консерватăрĕсем („хытă çамкасем“) „Аркос“ (Англипе суту-илў тăвакан Совет обшчĕстви) çине провокацилĕ тапăнассине организациленĕ. 1927 çулти майăн 26-мĕшĕнче Англин консервативлă правителстви Англи ССР Сойузĕпе дипломати тата суту-илў тĕлĕшпе çыхăнса тăрассине татни çинчен пĕлтернĕ.

1927 çулти ийунĕн 7-мĕшĕнче Варшавăра Пољшăн подданствинче тăнă вырăс белогвардейци ССРС посолне Войкăв йулташа вĕлернĕ.

Пĕр вăхăтрах ССРС территорийĕнче Англи шпионĕсемпе диверсанчĕсем Ленинградра парти клубне бомбă пăрахнă, çапла тунипе вĕсем 30 çынна йахăн амантнă, вăл шутра темиçе çын йăвăр амантнă пулнă.

1927 çулта çулла пĕр вăхăт тĕлнелех Берлинра, Пекинра, Шанхайра, Таљцзинре совет полпредствисем çине тата суту-илў представителствисем çине тапăнусем тунă.

Çакă вăл Совет влаçне татах та çĕнĕ йăвăрлăхсем кўнĕ.

Анчах ССРС такăнусенчен хăраса ўкмен, вăл империалиссен тата вĕсен агĕнчĕсен провокацилĕ тапăнăвĕсене çăмăллăнах айаккала сирсе ывăтнă.

Партипе Совет государствине троцкиссем тата ытти оппозиционерсем хăйсен ишĕлтерўлĕ ĕçĕпе унтан сахал мар йăвăрлăхсем кўнĕ. Ахаљтен мар унчухне Сталин йулташ çапла каланă: Совет влаçне хирĕç „Чемберленран пуçласа Троцкий таранах темскер, пĕрлĕх фрончĕ йеверлĕскер пулса пырат̆“, тенĕ. Партин XIV-мĕш сьесĕн решенийĕсене пăхмасăр тата оппозици лойољнă пуласси çинчен пĕлтерне пулин те, оппозиционерсем хĕçпăшала алран пăрахман. Унтан та ытларах—вĕсем хăйсен ишĕлтерўлĕ, расколљникла ĕçĕсене татах та ытларах вăйлатнă.

1926 çулта çулла троцкиссемпе зиновйĕвĕцсем партине хирĕçле блока пĕрлешеççĕ, çĕмĕрсе тăкнă пĕтĕм оппозицилĕ группăсен йулашкийĕсене блок тавра пĕтĕçтереççĕ тата хăйсен Ленина хирĕçле вăрттăн ĕçлекен партин никĕсне хываççĕ, çапла вара парти уставне тата парти сьесĕсен фракцисем тума чаракан решенийĕсене чăрсăррăн пăсаççĕ. Çак партине хирĕçле блока, меньшевиксен паллă Августовский блокĕ йеверлĕ пулса тăраканскерне, салатса йамасан, ăна майлă çынсемшĕн ĕç начаррăн вĕçленме пултарат̆, тесе парти Тĕпкомĕ асăрхаттарат̆. Анчах та, блок майлă тăраканнисем хăйсен ĕçне тума чарăнмаççĕ.

Çав çултах кĕркунне, партин XV-мĕш конференцийĕ умĕн, партине çĕнĕ дискуççине туртса кĕртме хăтланса, вĕсем Мускаври, Ленинградри тата ытти хуласенчи савăтсенче парти пухăвĕсенче сиксе тухнă. Вĕсем çавăн чухне парти членĕсем умне сўтсе йавма хăйсен платформине кăларса тăратаççĕ, вăл платформă йаланхи троцкисла-меньшевикла, Ленина хирĕçле платформă ўкерчĕкĕ пулса тăнă. Парти членĕсем оппозиционерсене хăйар отпор параççĕ, хăшпĕр вырăнсенче вара—вĕсене простă пухусенчен хăваласа кăларса йараççĕ. Парти вĕсен ишĕлтерўлĕ ĕçне малала чăтса тăма пултараймаст̆, тесе Тĕпком блок майлисене çĕнĕрен асăрхаттарат̆.

Оппозиционерсем, Троцкий, Зиновйĕв, Каменĕв, Сокољникăв алă пуснипе, Тĕпкома зайавлени параççĕ, вăл зайавленире вĕсем хăйсен фракцилĕ ĕçне сивлесе, малала лойаљнă пулма сăмах параççĕ. Апла пулин те, блок чăннипе малала та çаплах йулат̆, тата ун майлисем партине хирĕçле хăйсен вăрттăн ĕçне тума чарăнмаççĕ. Вĕсем çаплах Ленина хирĕçле хăйсен партине туса пыраççĕ, вăрттăн типографи тăваççĕ, хăйсен майлисем хушшинче член укçи илмеле тăваççĕ, хăйсен платформине сараççĕ.

Троцкиссемпе зиновйĕвĕцсем хăйсене çапла тыткаланă пирки, партин XV-мĕш конференцийĕ (1926 çулти нойабĕр) тата Коммунисла Интернационал Ĕçтăвкомĕн сарлака пленумĕ (1926 çулти декабĕр) троцкисла-зиновйĕвла блок çинчен сўтсе-йавма ыйту лартаççĕ, хăйсен решенийĕсенче блок майлисене, хăйсен платформипе меньшевиксен позицийĕ çине анса ларнă расколљниксем вырăнне хурса, питлеççĕ.

Анчах блок майлисемшĕн çакă та усăлă пулман. 1927 çулта, Англири консерватăрсем ССР Сойузĕпе дипломати тата суту-илў тĕлĕшĕнчи хутшăнусене татнă вăхăтра, вĕсем хăйсем парти çине тапăнассине çĕнĕрен вăйлатнă. Вĕсем Ленина хирĕçле „83 çынăн платформи“ текен çĕнĕ платформă тукаласа, ăна парти членĕсем хушшинче сарма тытăннă, Тĕпком умне пĕтĕм партири çĕнĕ дискуççине тума требовани лартнă.

Çак платформă мĕн пур оппозицилĕ платформăсенчен чи ытларах суйа, фарисейла платформă пулнă пулĕ.

Сăмахпа, урăхла каласан, платформăра, троцкиссемпе зиновйĕвĕцсем партин решенийĕсене тытса пырассине хирĕçлемен тата лойаљнăçшĕн калаçнă, анчах ĕçре вĕсем парти тата унăн Тĕпкомĕ тĕлĕшпе кирек мĕнле лойаљнă пулассинчен те мăшкăласа, партин решенийĕсене пит те чăрсăррăн пăснă.

Сăмахпа, урăхла каласан, платформăра, партин пĕрлĕхне хирĕç пулман тата раскола хирĕç калаçнă, анчах ĕçре вĕсем партин пĕрлĕхне пит те чăрсăррăн пăснă, раскол тăвас çула тытса пынă тата вĕсен хăйсен вăрттăн ĕçлекен, Ленина хирĕçле уйрăм парти пулнă, вăл парти пур паллăсем тăрăх та совета хирĕçле, контрреволљуцилĕ партине ўссе куçма пултарнă.

Сăмахпа, урăхла каласан, платформăра, вĕсем индустрилес политикăшăн калаçнă тата Тĕпкома, вăл индустрилес ĕçе çителĕклĕ пысăк хăвăртлăхпа илсе пымаст̆, тесе те айăпланă, анчах ĕçре вĕсем партин ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерессе çинчен йышăннă решенисене хурласа пĕтернĕ, социалисăмлă индустрилес политикăран мăшкăланă, савăтсемпе хапрăксене чылайĕшне йут çĕршыври капиталиссен аллине концеççине пама требовани лартнă, хăйсен тĕп шанчăкĕсене йут çĕршывсен ССР Сойузĕнчи капиталисла концеççийĕсем çине хунă.

Сăмахпа, урăхла каласан, платформăра, вĕсем колхоз йухăмĕшĕн калаçнă тата Тĕпкома, вăл коллективизаци ĕçне çителĕклĕ пысăк хăвăртлăхпа илсе пымаст̆, тесе те айăпланă, анчах ĕçре вĕсем хресченсене социалисăм строителствине йăвăçтарас политикăран мăшкăланă, рабочи класпа хресченсем хушшинче „татса парайми конфликтсем“ пурпĕрех пулмала тесе вĕрентнĕ тата хăйсен шанчăкне йалти „культурăлă арендатăрсем“ çине, урăхла каласан, кулак хуçалăхĕсем çине хунă.

Çакă вăл оппозицин мĕнпур суйа платформисенчен чи суйа платформи пулнă.

Вăл платформăна партине улталас тесе тунă.

Тĕпком дискуççине çийĕнчех уçассине пăрахăç тунă, вăл оппозиционерсене: дискуççине партин уставĕ тăрăх çеç, урăхла каласан, парти сьесĕччен икĕ уйăх малтан çеç уçма пулат̆, тесе каланă.

1927 çулти октаберте, урăхла каласан XV сьесчен икĕ уйăх малтан, партин Тĕп Комитечĕ пĕтĕм партири дискуççине пуçласа йанă. Дискуççилĕ пухусем пуçланнă. Дискуççин резулљтачĕсем троцкисла-зиновйĕвла блокшăн калама çук начар пулнă. Тĕпком политикишĕн партин 724 пин членĕ сассăланă. Троцкиссемпе зиновйĕвĕцсен блокĕшĕн—4 пин, урăхла каласан, пĕр процентран та сахалтарах. Партине хирĕçле блока пуççĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Парти хăйĕн нумайтарахăш пайĕпе пĕр шухăшлă пулса, блокăн платформине сирсе пăрахнă.

Çакăн пек пулнă партин,—ун патне блок майлисем хăйсем апеляцине пынă,—уççăн палăрса тăнă ирĕкĕ.

Анчах çак урок та блок майлисемшĕн усăлă пулман. Парти ирĕкне пăхăнас вырăнне, вĕсем парти ирĕкне аркатма шутланă. Дискуççи пĕтичченех те ĕнтĕ вĕсем, хăйсем пурпĕрех намăслăн пĕтессине курса, партипе Совет правителствине хирĕç тата та ытларах сивчĕ кĕрешў формисемпе усă курма йышăннă. Вĕсем Мускавра тата Ленинградра уççăнах протестлесе демонстраци туса ирттерме йышăннă. Хăйсен демонстрацине вĕсем нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче, Октаберти револљуци уйавĕн кунĕнче, ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем хăйсен револљуцилĕ пĕтĕм халăх демонстрацине туса ирттернĕ кун тума шутланă. Троцкиссемпе зиновйĕвĕцсем, çапла вара, паралеллĕ демонстраци тума шутланă. Çакăн пек пуласса кĕтсех тăмала пулнă: блок майлисем хăйсемпе пĕрле йурлакан сахал хисеплĕ етемсен мĕскĕн ушкăнне çеç урама илсе тухма пултарнă. Пĕтĕм халăх демонстрацийĕ блок майлă йурлакансене тата вĕсен атаманĕсене лучăркаса тăкса, айаккала кăларса ывăтнă.

Халĕ ĕнтĕ троцкиссемпе зиновйĕвĕцсем Совета хирĕçле лачакана кĕрсе ўкни çинчен иккĕленў пулма пултарайман. Пĕтĕм партири дискуççире вĕсем парти патне Тĕпкома хирĕç апеляципе пынă пулсан, кунта вара, хăйсен мĕскĕн демонстрацийĕ вăхăтĕнче, вĕсем тăшманла классем патне партине тата Совет государствине хирĕç апеляципе пырас çул çине тăнă. Бољшевикла партине ишĕлтерме тĕллев лартса, вĕсем пурпĕрех Совет государствине ишĕлтерес çул çине шуса анмала пулнă, мĕншĕн тесен бољшевикла партипе государствăна Совет çĕршывĕнче уйăрма çук. Çапла тунипе троцкисла-зиновйĕвла блокăн атаманĕсем хăйсене хăйсем парти тулашне тăратса хăварнă, мĕншĕн тесен парти ретĕнче Совета хирĕçле лачакана шуса аннă çынсене малашне те чăтса тăма пулман.

1927 çулти нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче Тĕпкомпа Тĕп Контроль Комиççин Пĕрлешўлĕ пухăвĕ Троцкине тата Зиновйĕва партирен кăларнă.

2. Социалисăмлă индустриализацин çитĕнĕвĕсем. Йалхуçалăхĕ йулса пыни. Партин XV сьесĕ. Йалхуçалăхне коллективласси патне çул тытни. Троцкисла-зиновйĕвла блока çĕмĕрсе тăкни. Политикăлă двурушничĕствă.

1927 çулăн вĕçĕ тĕлне ĕнтĕ социалисăмлă индустрилес политикăн татăклă çитĕнĕвĕсем палăрнă. Индустриализаци нэп условисенче кĕске вăхăтрах нумай малала кайма пултарнă. Промышлĕннăçпа пĕтĕм йалхуçалăхĕ (вăрман хуçалăхне тата пулă тытассине кĕртсе) хăйсен пĕтĕм продукцийĕпе вăрçăчченхи виçене çитнĕ кăна мар, тата вăл виçерен иртсе те кайнă. Халăх хуçалăхĕнче промышлĕннăç виçи вăрçăчченхи вăхăтăн тивĕçлĕ виçине çитсе, 42 процент таран ўснĕ.

Промышлĕннăçăн социалисăмлă сектăрĕ частнăй сектăр шучĕпе хăвăрт ўссе пынă, вăл 1924—1925 çулсенче 81 процент пулнă пулсан, 1926—1927 çулсенче 86 процента çити хăпарнă, çав вăхăтрах частнăй сектăрăн халăх хуçалăхĕнчи виçи çав тапхăр хушшинче 19 процентран 14 процента çити чакнă.

Çакă вăл—ССР Сойузĕнчи индустриализаци пит те уççăн палăрса тăракан социалисăмлă характĕрлине, ССР Сойузĕн промышлĕннăçĕ производствăн социалисăмлă системи çĕнтерес çулпа аталанса пынине, промышлĕннăç тĕлĕшпе „кам-кама“ тенĕ ыйтăва социалисăма усăлăн малтанлаçа татса панине пĕлтернĕ.

Суту-илўрен частника та çавăн пекех хăвăрт хĕссе кăларса пынă, унăн тўпи ваккăн тунă суту-илўре 1924—1925 çулта 42 процент пулнă пулсан, 1926—1927 çулта 32 процента çити чакнă, курттăмăн тунă суту-илў çинчен каламасăр та паллă, унта частник тўпи çав хушăрах 6 процентран 5 процента çити чакнă.

Татах та ытларах пысăк хăвăртлăхпа социалисăмла шултра промышлĕннăç ўссе пынă, унăн продукцийĕ 1927 çулта, хуçалăха ура çине тăратнă тапхăр хыççăнхи пĕрремĕш çулра, малтанхи çулпа танлаштарсан, 18 процент ўснĕ. Çакă вăл ўсĕмĕн рекордлă цифри пулнă, çавăн пек цифрăпа капиталисăмăн чи малта пыракан çĕршывĕсен шултра промышлĕннăçĕ те ўсме пултараймаст̆.

Йалхуçалăхĕн, уйрăмăнах—тĕштыр хуçалăхĕн, картинĕ урăхла пулнă. Йалхуçалăхĕ пĕтĕмĕшпе илсен вăрçăчченхи виçерен иртсе кайнă пулин те, унăн тĕп отрăçлин—тĕштыр хуçалăхĕн—пĕтĕм продукцийĕ вăрçăчченхи виçен 91 проценчĕ чухлĕ çеç пулнă, тĕштыр продукцин таварлă пайĕ, айакала, хуласене тăрантарма сутăнакан пайĕ, вара аран-аран вăрçăчченхи виçен 37 процентне çитнĕ, кунпа пĕрлех тата пур паллăсем те тĕштырăн таварлă продукцийĕ малала чакса пырас хăрушлăх пурри çинчен каланă.

Çакă вăл—1918 çулта вакланма пуçланнă йалти шултăра таварлă хуçалăхсем халĕ те çаплах вак хуçалăхсене, ваккисем—тата вакрах хуçалăхсене, тухса пынине, хресченсен вак тата питĕ те вак хуçалăхĕсем çурма натураљнăй хуçалăх, таварлă тĕштырăн чи пĕчĕк хисепне çеç пама пултаракан хуçалăх пулса пынине, 1927 çул тапхăрĕнчи тĕштыр хуçалăхĕ, вăрçăчченхи тĕштыр хуçалăхĕнчен нумайах мар кайа тырă туса, çапах та, хуласем валљи айаккала вăрçăчченхи тĕштыр хуçалăхĕ сутма пултарнинчен виçĕ пайран кăшт ытларах çеç сутма пултарнине пĕлтернĕ.

Тĕштырă хуçалăхĕ çавăн пек пулнă вăхăтра çар тата ССР Сойузĕнчи хуласем йаланах выçă ларасси умне тухса тăмала пулни çинчен нимĕн иккеленмели те пулман.

Ку вăл тĕштыр хуçалăхĕн кризисĕ пулнă, ун хыççăн выљăх-чĕрлĕх хуçалăхĕн кризисĕ пулма пултарнă.

Çавăн пек лару-тăруран тухас тесен, йалхуçалăхĕнче шултра производствăна, трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсене хута йама тата тĕштыр хуçалăхĕн таварлăхне темиçе хут ўстерме пултаракан шултра производствăна куçмала пулнă. Çĕршыв умĕнче икĕ май пулнă: йе капиталисла шултра производствăна куçмала пулнă, вăл хресченсен массине йухăнтарассине, рабочи класпа хресченсен сойузĕ пĕтсе ларассине, кулаксем вăйланассине тата йалта социалисăма парăнтарассине пĕлтернĕ пулĕччĕ, йе хресченсен вак хуçалăхĕсене социалисăмлă шултра хуçалăхсене, колхозсене, тĕштыр хуçалăхне тата унăн таварлă продукцине хăвăрт ўстерме трактăрсемпе тата кучухнехи йалхуçалăх машинисемпе усă курма пултаракан хуçалăха пĕрлештерес çул çине тăмала пулнă.

Паллах, бољшевикла партипе Совет государстви иккĕмĕш çул çине, йалхуçалăхне аталантарассин колхозлă çулĕ çине çеç тăма пултарнă.

Çакăн чухне парти çĕрĕçĕнче хресченсен вак хуçалăхĕнчен шултра, ертеллĕ, коллективлă хуçалăха куçма кирли çинчен Ленинăн çак кăтартăвĕсем çине тайăнса ĕçленĕ:

а) „Вак хуçалăхпа нушалăхран тухма çук“ (Ленин, т. XXIV, стр. 540).

б) „Епĕр ĕлĕкхи пекех вак хуçалăхсенче, ирĕклĕ çĕр çинче ирĕклĕ граждансем пулса ларатпăр пулин те, пирĕн умра çапах та пурпĕрех пĕтсе ларас хăрушлăх тăрат̆“ (т. XX, стр. 417).

в) „Хресченсен хуçалăхĕ малала аталанса пыма пултарат̆ пулсан, малашне куçса пырассине те çирĕппĕн пурнăçа кĕртни кирлĕ, малашве куçса пырасси вара—пурпĕрех сахалтарах усăлă тата ытларах кайа йулнă, вак, хресченсен уйрăм тăракан хуçалăхĕ майĕпен пĕрлешсе, обшчĕствăлă, шултра çĕрĕç хуçалăхĕ организацилессинче пулат̆“ (т. XXVI, стр. 299).

г) „Хресченсене çĕре пĕрлешсе, коллективлă, йулташлă, ертелпе ĕçлени лайăхрах пулнине ĕçре кăтартса пама май килсен анчах, хресчене йулташла, ертеллĕ хуçалăх туса пулăшма май килсен анчах,—çапла тусан анчах государствă влаçне хăй аллинче тытса тăракан рабочи клас хресчене хăй тĕрĕссине чăн-чăнах кăтартса парĕ, нумай миллионлă хресченсен массине хăй йенне çирĕппĕн тата кирлĕ пек чăн-чăнах çавăрма пултарĕ“ (т. XXIV, стр. 579).

Çавăн пек пулнă обстановкă партин XV-мĕш сьесĕ умĕн.

Партин XV-мĕш сьесĕ 1927 çулти декабĕрĕн 2-мĕшĕнче уçăлнă. Сьесра ĕç тăвакан сасăпа 898 делегат тата канашлакан сасăпа 771 делегат пулнă, вĕсене партин 887.233 членĕ тата 348.957 кандидачĕ суйласа йанă.

Хăйĕн отчотлă докладĕнче индустриализацин çитĕнĕвĕсене тата социалисăмлă промышлĕннăç хăвăрт ўссе пынине паллă туса, Сталин йулташ парти умне çакăн пек задачă лартнă:

„Халăх хуçалăхĕнче капиталисла елементсене пĕтерес çулĕпе тытса пырса, хулара та, çавăн пекех йалта та, хамăрăн халăх хуçалăхĕн мĕнпур отрăçлисенчи социалисăмла йертсе пыракан вырăнсене сарса тата çирĕплетсе пымала“...

Йалхуçалăхне промышлĕннăçпа танлаштарса тата йалхуçалăхĕ, уйрăмăнах тĕштырă хуçалăхĕ кайа йулнине паллă туса,—çав кайа йулнăлăх йалхуçалăхĕ сапаланчăк пулнинчен килет тата вăл кучухнехи техникăпа усă курма май памаст̆,—Сталин йулташ çакна палăртса панă: йалхуçалăхĕ çакăн пек ăмсанмала мар пулни пĕтĕм халăх хуçалăхĕшĕн хăрушă лару-тăру туса хурат̆.

(Малали 3-мĕш страницăра)

МАЛАЛИ.

„Ăçта-ха çакăнтан тухмали çул?"—тесе ыйтнă Сталин йулташ.

„Çакăнтан тухмали çул вăл,—ответленĕ Сталин йулташ,—хресченсен вак тата сапаланчăк хуçалăхĕсем çĕре пĕрлешсе ĕçлемели никĕс çинче шултра тата пĕрлешÿлĕ хуçалăхсене куçнинче, çĕнĕ, çÿлте тăракан техникă никĕсĕ çинче çĕре пĕрлешсе ĕçлесси çине куçнинче. Çакăнтан тухмали çул вăл—хресченсен вак тата питех те вак хуçалăхĕсене майĕпен, анчах пĕр парăнмасăр, ирĕксĕрленипе мар, кăтартса, ĕнентерсе пынипе, çĕре пĕрлешсе, йулташлă, коллективлă ĕçлесе тăма, йалхуçалăх машинĕсемпе тата трактăрсемпе усă курма, çĕрĕçне наукă кăтартнă меслетсемпе лайăхлатса пыма шултра хуçалăхсене пĕрлештерсе пынинче пулса тăрать. Урăх çул çук".

XV сйес йалхуçалăхне **коллективлас ĕçе** пур майсемпе те сарса пырасси çинчен решени йышăннă. Сйес колхозсемпе совхозсен йышне сарса пымали тата çирĕплетмели плана палăртса хунă тата йалхуçалăхне коллективлассишĕн кĕрешмели мелсем çинчен тĕплĕ кăтартусем панă.

Çакăнпа пĕрлех, сйес çапла директивă панă:

„Кулаксем çине наступлени тăрассине малала вăйлатса пымала тата йалта капиталисăм аталаннине пÿлсе пыракан, хресченсен хуçалăхне социалисăм çулĕпе илсе пыракан чылай çĕнĕ ĕçсем тумала" (ВКП(б) в резолюциях, ч. II, стр. 260).

Йулашкинчен, халăх хуçалăхĕнче план тăрăх ĕçлессине çирĕплетес тесе, тата социалисăм халăх хуçалăхĕн пĕтĕм фрончĕпе капиталисăмлă елементсене хирĕç планлă йĕркепе наступлени туса пырас ĕçе организацилессине шута илсе, сйес тивĕçлĕ органсене халăх хуçалăхĕн **пĕрремĕш пилĕкçуллăх** планне тума директивă панă.

Социалисăмлă строительствă ытăвĕсемпе ĕç пĕтерсе, партин XV-мĕш сйесĕ троцкисла-зиновйĕвла блока пĕтерсе хурас ыйту çине куçнă.

Сйес: „оппозици идейă тĕлĕшпе ленинисăмран уйăрălса кайнă, меньшевикла группă пулса кайнă, пĕтĕм тĕнчери тата çĕршыв ăшĕнчи буржуази вăйĕ умĕнче капитуляци тăвас çул çине тăнă тата обйективлă вăл пролетарилĕ диктатурăн режимне хирĕç виççĕмĕш вăйĕн орудийĕ пулса тăнă" тесе йышăннă (ВКП(б) в резолюциях, ч. II, стр. 232).

Сйес: партипе оппозици хушшинчи разногласисем программăлă разногласине ÿссе куçнине, троцкисла оппозици совета хирĕçле кĕрешес çул çине тăнине тупса палăртнă. Çавăнпа та XV-мĕш сйес: троцкисла оппозицинче тăнипе тата унăн шухăшĕсене пропагандăланипе пĕр вăхăтрах большевикла парти ретĕнче тăни пулма пултараймасть, тесе пĕлтернĕ.

Сйес Тĕпкомпа Тĕп Контроль Комиççин Пĕрлешÿлĕ пухăвĕ Троцкипе Зиновйĕва партирен кăларма йышăннă постановленине ырласа, троцкисла-зиновйĕвла блокăн активлă дейателĕсене пурне те, Радек, Преображенский, Раковский, Пйатаков, Серебрйаков, И. Смирнов, Каменĕв, Саркис, Сафарăв, Лифшиц, Мдивани, Смилга йевĕрлисене тата „демократилĕ централисăм" группине пĕтĕмпех (Сапронăва, В. Смирнова, Богуславскине, Дробниса т. ыт. те) партирен кăларма йышăннă.

Идейă тĕлĕшпе çапса çĕмĕрнĕ тата организаци тĕлĕшпе аркатса тăкнă троцкисла-зиновйĕвла блок майлисем халăх хушшинчи хăйсен йулашки влийанийĕсене çухатса пĕтерне.

Ленина хирĕçле пыракансем, партирен кăларнăскерсем, партин XV-мĕш сйесĕ иртнĕ хыççăн кăшт вăхăт иртсен, троцкисăмран уйăрălни çинчен пĕлтерсе партине кайала илме ыйтса зайавленисем пама тытăннă. Паллах, парти ун чухне, Троцкий, Раковский, Радек, Крестинский, Сокольникăв тата ыттисем те тахçантанпах ĕнтĕ халăх тăшманĕсем, йут çĕршыв разведкисене кĕрешнĕ шпионсем пулса тăнине, Каменĕв, Зиновйĕв, Пйатаков тата ыттисем те ССР Сойузĕн тăшманĕсемпе капиталисла çĕршывсенче Совет халăхне хирĕç „ĕçлеме" çыхăнусем майлаштарнине пĕлме пултарайман-ха. Анчах та парти çак çынсенчен,чи ответлă самантсенче Ленина тата ленинла партине хирĕç пĕрре кăна мар тухнăскерсенчен, кирек йепле ирсĕрлĕхе те кĕтме пулнине опыт тăрăх çителĕклĕ таранах вĕренсе çитнĕ. Çавăнпа та партирен кăларнисен зайавленийĕсем çине парти шанмасăр пăхнă. Зайавлени паракансен тÿрĕлĕхне пирвайлăха тĕрĕслеме, партине кайала кĕрес текенсемшĕн парти çакăн пек требовани лартнă:

а) троцкисăма, большевикла партипе Совета хирĕç пыракан идеологи выранне хурса, уççăнах сивлени;

б) парти политикине, пĕртенпĕр тĕрĕс политикă вырăнне хурса, уççăнах йышăнни;

в) партипе унăн органĕсен решенисене пĕр сăмахсăр пăхănни;

г) тĕрĕсленес срук витĕр тухни, çак срук хушшинче зайавлени паракансене парти тĕрĕслесе пырать тата вăл срук иртсен, тĕрĕсленин результатне пăхса парти партирен кăларнисене партине кайала илесси çинчен кашни пирки уйрăмăн ыйту лартать.

Кăна тунă чухне парти çапла шутланă: партирен кăларнисем йенчен çак пунктсене уççăн йышăнни кирек йепле условисенче те партишĕн лайăх пĕлтерĕшлĕ пулмала, мĕншĕн тесен вăл троцкисла-зиновйĕвла ретсен пĕрлĕхне çĕмĕрсе тăкать, вĕсем пăсălса арканассине пуçласа йарать, партин тĕрĕслĕхĕпе хăватлăхне тепĕр хут кăтартса парать тата,—зайавлени авторĕсем тÿрĕ кăмăллă пулсан,—партине хăйĕн работникĕсем пулнисене кайала тавăрма май парать, вĕсем тÿрĕ кăмăллă мар пулсан вара,—вĕсене пĕтĕм халăх куçĕ умĕнче йанăш тăвакан çынсем вырăнне хурса мар ĕнтĕ, идейăсăр карйериссем, рабочи класа улталакансем, хăйсен йуррине йурласа иртернĕ двурушниксем вырăнне хурса питлеме май парать.

Партирен кăларнисенчен нумайĕшĕсем парти кăларса тăратнă партине илмели условисене йышăннă тата хаçатра тивĕçлĕ зайавленисем пичетлесе кăларнă.

Парти, вĕсене хĕрхенсе тата вĕсене çĕнĕрен партипе рабочи класăн çыннисем пулса тăма май парассине хирĕç тăмасăр, вĕсене парти членне кайала илнĕ.

Анчах, вăхăт иртнĕ майĕн, троцкисла-зиновйĕвла блокăн „активлă дейателĕсен" зайавленийĕсем, хăшпĕрисемсĕр пуçне,—витĕрех суйа, икĕпитлĕ зайавленисем пулни палăрнă.

Çак господасем, хăйсен зайавленийĕсене париччĕнех те ĕнтĕ, халăх умĕнче хăйĕн шухăшĕсене хÿтлеме хатĕр тăракан политикăлă течени пулма пăрахнă пулнă тата хăйсен шухăшĕсен йулашкийĕсене пурин куçĕ умĕнче пăрахса таптама хатĕр тăракан, хăйне йут пулса тăракан парти шухăшĕсене пурин куçĕ умĕнче мухтама хатĕр тăракан, рабочи класа та, унăн партине те пăкăç тăвас шутпа хăйне мĕнле те пулсан партире, рабочи класра сыхласа хăварас тесе, — хамелеонсем пек, — кирек мĕнле краскăпа та витĕнме хатĕр тăракан идейăсăр карйерисла ушкăн пулса тăнă пулнă.

Троцкисла-зиновйĕвла „активлă дейателсем" политикăлă мошенниксем, политикăлă двурушниксем пулнă.

Политикăлă двурушниксем йалавах улталанинчен пуçлаççĕ тата хăйсен ирсĕр ĕçне халăха, рабочи класа, рабочи класăн партине улталанипе туса пыраççĕ. Анчах политикăлă двурушниксене ултавçăсем кăна тесе шутлама йурамасть. Политикăлă двурушниксем вĕсем тахçанах халăх шанчăкне çухатнă тата ултавпа, хамелеонла, мошенникла хăтланса, — мĕнле май килнĕ çавăн пек, — мĕнле те пулин çĕнĕрен шанăçа сĕтĕрĕнсе кĕме, хăйсенче политикăлă дейателсен йатне сыхласа хăварма тăрăшакан политикăлă карйериссен идейăсăр ушкăнĕ пулса тăраççĕ. Политикăлă двурушниксем — вĕсем, „майлă вăхăтра" политикăлă сценă çине çĕнĕрен сиксе тухас, халăхăн „правителĕ" пулса унăн ĕнси çине ларас тесе, кирек кам çине те, уголовнăй елементсем çине те пулин, общĕствăн кайашĕсем çине те пулин, халăхăн ылханлă тăшманĕсем çине те пулин тайанса тăма хатĕр тăракан политикăлă карйериссен принципсăр ушкăнĕ пулса тăраççĕ.

Троцкисла-зиновйĕвла „активлă дейателсем" шăлах çавăн пек политикăлă двурушниксем пулнă.

(ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет)

Мăн Пуйанкасси йалĕнчи кулакла саботаж

ШĂМĂРШĂ. (Хамăр корр.). Шăмăршă районĕнчи Мăн Пуйанкасси йалсовечĕ государствă умĕнчи паллă обйазателствăсене тултарса пырас ĕçре чи кайа йулнисен шутне кĕрет. Финанс планне, аш-какай, сĕт-çу тата государствă умĕнчи ытти обйазателствăсене нихăçан та тултарса пыман.

Йалсовечĕ 1938 çулти 3-мĕш квартăлти финанс планне 50 процент, 4-мĕш квартăл планне 12 процент анчах тултарнă, аш-какай тăратас плана 74 процент, тĕштырă тăратас плана 97 процент çеç тултарнă. Государствă умĕнчи обйазателствăсене уйрăмăнах йединоличниксем начар тултарса пыраççĕ. Йалхуçалăх налогĕ тата ытти тÿлевсем йенĕпе илсен йединоличниксенче 65 пин тенкĕ парăм шутланать.

Партипе советăн районри организацисем йулашки вăхăта çитиччĕнех çак йалсовечĕ çине çавăрăнса пăхман, государствăлă тата хуçалăхлă-политикăлă ĕçсене пурнăçа кĕртес çĕрте йалсовечĕ мĕншĕн йулса пынине тĕрĕслесе пĕлме тăрăшман. Вĕсем ПСК(б)Ц Тĕп Комитечĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, йединоличниксем тĕлĕшĕпе тивĕçлĕ вывăд туман, çакна пула ĕнтĕ Мăн Пуйанкасси йалсоветĕнчи йединоличниксем чăннипе илсен, колхозниксенчен ытларах çăмаллăх илнĕ.

Йалсовет руководствинче икĕ çул хушши белогвардейĕц Куропаткин ларнă, вăл йединоличниксене государствăна хирĕçле ĕçсем тума май парса пынă, партипе правителствă директивисене хирĕç саботаж тунă. Çаксем ĕнтĕ пĕтĕмпех хăшпĕр йединоличниксене, уйрăмăнах ĕлĕк кулак пулнисене, вăрлас, çаратас, спекуляци тăвас ĕçсем тума, партипе правителствă иртерекен ĕçсене хирĕç тÿррĕмĕнех саботаж тăвас çул çине тăма май панă.

Çак кунсенче районри прокуратурăпа следстви органĕсем Мăн Пуйанкасси йалĕнче Хайлăвсемпе Морозăвсен совета хирĕçле кулакла ушкăнне тупса палăртнă. Çак ушкăн темиçе çул хушши государствă вăрманне вăрласа, спекуляци туса тата колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче совета хирĕçле агитаци сарса пурăннă.

Çак совета хирĕçле кулакла ушкăн 11 тăванран пĕрлешсе тăнă хуçалăхсем. 2 çул хушши укçа-тенкĕ тÿлевĕсемпе те тата государствă умĕнчи тĕрлĕрен хатĕрлевсен йенĕпе те обйазателствăна тултарман. Хăйсен государствăна хирĕçле тата вăрă-хурахла ĕçĕсемпе Хайлăвсемпе Морозăвсен кулакла ушкăнĕ кайа йулнă колхозниксем хушшинче киревсĕр шухăшсем сарнă тата „Пламя труда" колхозра ĕç дисциплинине пасна. Вĕсем колхозниксене колхозран тухма хушса, совета хирĕçле агитаци туса пынă.

Колхоза хирĕçле агитаци сарнипе пĕрлех, çак вăрă-хурахла ушкăн колхоз пурлăхне те çаратнă. Пĕр çул хушшинче вĕсем колхозăн 7 лайăх лашине вăрланă. Çак вăрă-хурахла бандăн пуçлăхĕсем Алексей Хайлăв, Виктăр Морозăв тата Тимофей Морозăв икĕ çул хушши вăрă ĕçĕпе пурăннă, государствă вăрманне вăрласа сутнă. Вĕсем вăрланă вăрмана пĕр Кив Шаймурзинă йалĕнче кăна 1860 тенкĕлĕх сутнă.

Совета хирĕçле кулакла ушкăнăн ĕçĕ пĕтĕмпех партипе правителствă йалта иртерекен государствă, хуçалăх ĕçĕсене чăрмантарса пырасси патне илсе пынă, ĕç дисциплинине пăсса колхоза çалатас, колхоз пурлăхне çаратас, вăрă-хурахла ĕçсем урлă, спекуляци туса хăйсен кулакла хуçалăхĕсене вăйлатас тата колхозниксемпе йединоличниксене партипе правителствăн политикине хирĕç пыртарас задачăсем лартнă.

Совета хирĕçле кулакла ушкăнăн членĕсем камсем пулса тăраççĕ-ха? Акă çак вăрă-хурахла бандăн уйрăм çыннисен чăн сăн-сăпатне кăтартса паракан хăшпĕр тĕслĕхсем.

Алексей Хайлăв. Ĕлĕк вăйлă кулак пулнăскер. Вăл вăрă-хурахла ĕçсемшĕн, спекуляци тата саботаж тунăшăн виçĕ хутчен судпа айапланнă. Унăн ывăлне—Михаила 1932 çулти августăн 7-мĕшĕнче тухнă саккун тăрăх айапласа вунă çуллăха тĕрмене хупса лартнă пулнă, вăл тĕрмерен тухса тарнă, халĕ те тарса çÿрет. Халхи вăхăтра Хайлăвăн хăйĕн çурт пур, виçĕ лаша, шултăра выльăхсем, сурăхсем тата килти ытти выльăх-чĕрлĕхсем усрать. Государствă вăрманне вăрласа йаланах спекуляци тăвать. Ăна преступленилĕ ĕçсем тунă чухнех 7 хутчен тытнă. Йалсовечĕ тата вăрман хуçалăхĕн руководителĕсем ун çинчен темиçе хутчен те актсем çырнă, штрафсем хунă. Анчах вăл штрафсене никам та пырса илмен. Хайлăв хăйĕн вăрă-хурахла ĕçĕсене ним чăрмавсăр тата айапланмасăр туса пынă.

Хайлăв нимĕнле обшĕствăлă ĕçсенче те хутшăнса ĕçлемен, государствă умĕнчи обйазателствăсене çултан çул тултармасăр пынă. Лашасем çине хунă налога йурийĕх тÿлемесĕр кутăнланса тăнă. Халхи вăхăтра ун çинче государствăна тÿлемели парăмсем 1100 тенкĕ шутланаççĕ. Ку шута государствăна тырă, аш-какай, сĕт, çĕрулми тăратманнисене кĕртмен. Хайлăв государствă умĕнчи обйазателствăсене пурнăçлас çĕрте кутăнланса тăнине пĕрлех, йединоличниксемпе колхозниксем хушшинче государствă умĕнчи парăмсене памала мар тесе агитаци сарнă.

Виктăр Морозăв. Вăрманпа суту-илÿ тунăскер. Вăлах бакалей таварĕсемпе те сутă тунă. 1932 çулта государствă умĕнчи обйазателствăсене парса татманшăн ăна 5 çуллăха суд тунă пулнă. Халхи вăхăтра та вăл государствă умĕнчи обйазателствăсене кутăнланса тÿлемесĕр тăрать, обшĕствăлă ĕçсенче: çулйĕр строителствинче, вăрман хатĕрлевĕнче, шкул строителствинче тата ытти çĕрте хутшăнса ĕçлемест. Унăн тĕп ĕçĕ — вăрласси тата спекуляци тăвасси пулса тăрать.

Тимофей Морозăв (Виктăр тăванĕ). Вăрласа спекуляци туса хăйĕн кулакла хуçалăхне вăйлăн ура çине тăратса пынă. Халхи вăхăтра унăн хăйĕн пÿрчĕ, 3 лаша, ĕне т. ыт. те пур. Лашасемшĕн хунă налога тÿлеме килĕшмен, государствă умĕнчи 3200 тенкĕлĕх парăма тÿлемен. Государствăна аш-какай тата çĕрулми тăратмали заданисене тултарман.

Порфирипе Федăр Морозăвсене, А. Хайлăва тата кулакла ушкăнри ытти çынсене те çакăн пекех хак пама пулать. Политикă тĕлĕшĕнчен пăсălса кайнă çак кулакла ирсĕрсен пĕтĕм вăрăла, спекулянтла, государствăна хирĕçле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă, кулакла саботажăн пуçлăхĕсене арĕсленĕ.

Çакна паллă туса хăварни кирлĕ: Мăн Пуйанкасси йалсоветĕнчи ĕççыннисем тата Тури-Пуйанкассинчи колхозниксем çак совета хирĕçле кулакла ушкăна тăрă шыв çине кăларас ĕçе активлăн хутшăннă. Йалсоветĕнче кулакла саботаж пулни çинчен вĕсем районри судпа следстви органĕсене пĕр хут çеç мар сигналсем панă. Кулакла ушкăна арĕсленине йалсоветĕнчи ĕççыннисем ырлаççĕ.

Совета хирĕçле елементсен кулакла саботажне хирĕç ответлесе йалсоветри ĕççыннисем IV-мĕш квартăлти финанс планне срукчен тултарма йышăннă. Вĕсем хăйсен çак обйазателствине практикăлă ĕçпе çирĕплетеççĕ. Укçа-тенкĕ мобилизацилес плана темиçе кун хушшинчех 35 процент тултарнă.

Совета хирĕçле кулакла ушкăн ĕçĕ пирки следстви туса пĕтерне. Çывăх кунсенчех кăтартулă процес пулать. Районри ĕççыннисем халăх судĕнчен, политикă тĕлĕшĕнчен пăсălса кайнă, çарату, спекуляци тăвас тата организацилĕ саботаж тăвас çул çине тăнă кулакла ирсĕрсене хайăррăн айаплама ыйтаççĕ.

КОЛХОЗА КĔРЕÇÇĔ

■■ ТĂВАЙ. Йалта политикăлă-массăлă агитацине анлăн сарса пынă май районра нумай çитĕнÿсем пулса пыраççĕ. Халĕ Çĕнĕ Ишпуç, Киччĕ, Вырăс Нăрваш, Кĕрше колхозĕсем государствăна çĕрулми, тĕштырă тата ытти парăмсене те парса татрĕç. Йединоличниксем колхоза массăлăн кĕрреççĕ.

Пайанхи куна районра пурĕ 189 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Вăл шутран Тушкилти „Хĕрлĕ Çар" колхоза 32 хуçалăх, Йенĕш Нăрвашри „Красная Чувашия" колхоза 27 хуçалăх, Мучарти „25 Октября" колхоза 25 хуçалăх, Йампулатри „Çăлтăр" колхоза 23 хуçалăх кĕнĕ.

Вл. Илйин.

■■ ШАХАСАН. Матшÿри „Çамрăк колхозник" колхозра колхозниксен йышĕ ÿссех пырать. Тÿрĕ ĕçлекен йединоличниксем пуйан та культурăлă пурнăç колхозра çеç иккенне ăнланса илсе колхоза кĕреççĕ. ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ пулса иртнĕренпе Матшÿ колхозне 18 хуçалăх кĕчĕç.

С. Герасимăв.

■■ ЙЕТĔРНЕ. Колхозниксем пуйан та культурăлă пурăнаççĕ. Акă, Пырçырлан колхозĕнчи ватă колхозник Леонтий Горбатăв кăçал пĕччен ĕçлесе 200 пăта йахăн тĕштырă илет. Колхозра тырпул тухăçĕ çуллен ÿссе пырать. Çакна кура уйрăм хуçалăхпа пурăнакансем 20 хуçалăх колхоза кĕчĕç. Кăкшăмри Илйич йачĕпе тăракан колхоза 40 хуçалăх, Чурпайри Кирăв йачĕпе тăракан колхоза 26 хуçалăх кĕнĕ. Чылай йалсем (Йадрино, Çĕнĕ Йетĕрне) талкишпех колхозлă йалсем пулса тăчĕç.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ пулса иртнĕренпе районĕпе 309 хуçалăх колхоза кĕнĕ.

Ник. Цветков.

■■ ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Нойаберĕн 11-мĕшĕнче Уйпуçĕнчи Енгельс йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ 9 хуçалăха колхоза илчĕ. Енесĕр колхозниксене колхоз 4 пăру илсе пачĕ.

П. Кашин.

■■ ВĂРНАР. Иртнĕ пухура Кăмашри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсемпе йединоличниксен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура колхоз йухăмĕ çинчен доклад пулчĕ. Çавăн хыççăн 5 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

С.К.

Йапони самурайĕсене епĕр мĕнле çĕмĕрсе тăкрăмăр

„Вăйсăррисенчен каçару ыйтмаççĕ. Вăйсăррисене çапса тăкаççĕ çеç мар тата пĕтерсе те хураççĕ. Йапони империйĕн çарĕн командованийĕ пирĕнтен каçару ыйтрĕ. Мирлĕ лару-тăрăва пăснă тăшманăн ирĕксĕрех мир тăвасси çинчен ыйтмала пулчĕ. Хасан кÿлли патĕнче епĕр никам çине те тапăнма шутламан, епĕр хамăрăн çĕре пĕр вершук та парас мар терĕмĕр çеç.

... Çакă ĕнтĕ вăл Сталин çакăн пек каланине пĕлтерет те: „Епĕр мирлĕ саманашăн тăратпăр. Анчах хамăра йунанинчен хăрамастпăр, вăрçă пуçарса йаракансем пире çапма тăнине хирĕç çапма епĕр хатĕр".

Çапла çырать А. Косарĕв йулташ нумайах пулмасть „Молодая Гвардия" издателстви пичетлесе кăларнă „Йапони самурайĕсене епĕр мĕнле çĕмĕрсе тăкрăмăр" йатлă пит те чаплă кĕнекен умсăмахĕнче. Вăл кĕнекене совет халăхĕ тата унăн чаплă Хĕрлĕ Çарĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Совет Сойузĕн никам тивме пултарайман таса чиккисене паттăрăн хÿтлени çинчен калакан статйасемпе документсенчен пухса сборник туса кăларнă.

Ку кĕнеке вулакана пирĕн аслă тăван çĕршывăн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чиккисене Йапони самурайĕсенчен хÿтлекен советăн мухтавлă пограничникĕсĕн геройлăхне, Хĕрлĕ йалавла Приморски Пĕррмĕш çар чăçĕсен геройлăхне сарлакан çутатса парать.

Пирĕн бойецсем Хасан кÿлли патĕнче хăйсене пĕр шеллемесĕр халиччен пулманла хăйулăхпа массăлă геройлăх кăтартрĕç. Çакна,—тесе çырать малала А. Косарĕв,—Совет Сойузĕнчи халăхсен пурнăçĕнче куллен кун пулса пыракан хастарлăхран, хăйулăхпа паттăрлăхран уйăрма çук.

Совет халăхĕн йуратнă çĕршывĕ çинчен—Инçет-Хĕвелтухăç крайĕ çинчен—пурнăçа илемлĕн те çутăн кăтартса паракан историлĕ-економикăлă очĕрксенчен йатарласах пысăк пай туса çырнă. Вулаканăн умĕнче большевиксен партийĕ йертсе пынипе, аслă Сталин йертсе пынипе совет халăхĕ вăратнă йумахри пек пуйан та илемлĕ край тухса тăрать. 1918—1922 çулсенче çак крайа Йапони самурайĕсемпе белогвардейĕцла пÿтсĕрсенчен тасатнин паттăрла кĕрешĕвĕн картинĕсем тухса тăраççĕ.

Анчах Йапони интервенчĕсемпе вĕсен белогвардейĕцла йулашкийĕсене çĕмĕрсе тăкса хăваласа йанă хыççăн та самурайсем советăн Инçет-Хĕвелтухăçне тытса илесси çинчен шухăшлама пăрахмаç, халĕ те пăрахмаççĕ-ха. Нумай çулсем тăршшĕ ĕнтĕ вĕсем советăн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чиккисем патĕнче пĕрмайах провокацисем организацилеççĕ.

Йапони провакацийĕсен тĕп мелĕ — совет территорийĕ çинĕ бандăсем йарасси тата чикĕсене малтан пĕчĕкрех, унтан пысăкран та пысăк отрйадсемпе пăсасси пулса тăрать.

„Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕри мухтавлă чăçсем,—тесе пĕлтерет „На страже дальневосточной границы" йатлă хаçатра хăйĕн статйинче майор А. Агейĕв, ССРС Верховнăй Совет депутачĕ,—1927—1937 çулсем хушшинче белогвардейĕцла бандăсене пурĕ 150 ытла тытса пĕтерсе тăкнă, вĕсем йалтах Йапони империалисăмĕ хатĕрлесе пирĕн территори çине кăларса йанăскерсем пулнă. Пограничник-чекиссен аллисенчен Йапони фашисăмне тара кĕрешнĕ троцкисла-бухаринла шпионла шайкинчи çĕршер çĕлен-калтасем те хăтăлаймарĕç. Епĕ командир пулнă отрйадра (Гродеково районĕ) вунă çул хушшинче (1925 çултан пуçласа 1935 çула çитиччĕнхи хушăра) ун пеккисене акă мĕн чухлĕ тытнă: чикĕне пăсакансене —31.092, шпионсене—384, диверсантсене—37, бандитсене—216, контрабандиссене—9.679, икĕ çул хушшинче хĕçпăшалсем çакăн чухлĕ туртса илнĕ: вйнтовкăсем—3.847, револьвĕрсем—1.077, пулеметсем—2, гранатăсем—92, патронсем—18.140 штук".

Агейĕв йулташ ССР Сойузĕн Инçет-Хĕвелтухăç чиккисене хуралласа тăракан бойецсен тĕлĕнмеле чăтăмлăхĕпе çирĕплĕхĕ çинчен кăтартса паракан примерсем çинчен хăйĕн статйинче чылай каласа парать. Йапонĕцсем совет хĕçпăшалĕн вăйне тахçанах курса ĕненнĕ ĕнтĕ. Тем вăхăтра,—тесе пĕлтерет Агейĕв йулташ,—Йапони салтакĕсем çакăн пек халлаç кăларса йанă: „Красноармеец стреляй, пуля его три солнца ходи, все равно в нас попади". Ку вăл çакна пĕлтерет: красноармейĕц çав тери тĕл перет, унăн пулли виçĕ кун çÿресен те пурпĕрех тĕл тивет.

Йапони самурайĕсемшĕн,—тесе çырать Агейĕв йулташ,—сĕмсĕрлĕхпе хăравçăлăх пĕтĕçни паллă пулса тăрать.

Йапонĕцсен икĕ роти, совет чикки урлă каçса кĕрсе, пирĕн пограничниксен сахал йышлă отрйачĕ çине пеме пуçланă. Отрйад командирĕ Агейĕв йулташ пулнă. Тăшманăн вăйĕ ытлараххине пăхмасăр,Агейĕв йулташ наступлени çине куçнă. Хĕрÿлĕ çапăçу пуçланса кайнă, ун çинчен Йапонин çар специалисĕсем тăрăхса çапла çырнă вара:

„Капитан Агейĕв тактикăна пĕлмест. Вăл пĕр взводпа императăр çарĕн икĕ ротине хирĕç тухма тата вĕсене çĕмĕрсе тăкма хăйнă. Ун пек вăрçă ĕçĕсем хăйшĕнех хăрушă...".

„Хăрушлăх çинчен калас тăк вара,—тесе çырать ку тĕлĕшпе Агейĕв йулташ хăйĕн статйинче,—событисем çакна кăтартса пачĕç: пирĕнтен ытларах Йапони захватчикĕсемшĕн, совет чиккине пăснăскерсемшĕн тата ку вăл вĕсемшĕн пулсан нимĕнсĕрех иртсе кайĕ тесе шутланăскерсемшĕн хăрушлăх пулнине кăтартрĕç. Тем тесен те çапăçу пулаччĕн те тата çапăçу пулнă хыççăн та ĕççене Йапони специалисĕсене хирĕç пырса тунишĕн епĕ ним чухлĕ те пăшăрханман".

Кĕнекере пухнă документсене, Хасан кÿлли патĕнчи мухтавлă çапăçусен участникĕсем каласа панисене, хаçатри заметкăсене хумханусăр вулама çук.

Хасан кÿлли патĕнче пулса иртнĕ событисемпе вулакана Стаженко капитанăн пысăк статйи паллаштарать, вăл статйа „Правда" хаçатра та пичетленнĕ. Малала кĕнекере 1938 çулти ийулĕн йулашки кунĕсенче йапонĕцсемпе çапăçнисем çинчен пограничниксем каласа панисем, август уйăхĕнче пулнă çапăçусен участникĕсем каласа панисем, кайаççĕ. Хасан кÿлли патĕнче Йапони самурайĕсене çĕмĕрсе тăкнă пирĕн тăван çĕршывăн чаплă артиллериссем, хăйулă танкиссем, мухтанма тивĕç соколсем çинчен кĕнекере уйрăм пайсем туса çырнă. Чылай статйасемпе калавсем çав пĕтĕм совет халăхĕшĕн ĕмĕр асран кайми кунсенче коммуниссен аслă ролĕ çинчен калаççĕ. Вĕсене „Сталин йачĕпе" йатлă пайра кăтартнă.

„Уйрăмах бойецсене,—тесе çырать красноармейĕц Багров,—пирĕн отрйадăн аслă лейтенанчĕ Сидоренко йулташ хыттăн тĕлĕнтерчĕ, Вăл—чăн-чăн герой, хăйулă та ĕçе татăклăн тăвакан командир. Сидоренко йулташ хăйĕн красноармейĕцĕсене виçĕ хутчен атакăна илсе кайрĕ, фашиссен войскисене çĕмĕрсе тăкрĕ, тăван совет çĕрне хыттăн сыхларĕ.

Сидоренко йулташ бойецсене çапăçува: „Малала, йулташсем, захватчиксене штурмălар,тăван Сталина вĕçĕмсĕр йуратса тăнине ĕçпе кăтартса парар!" лозунгпа илсе пычĕ.

Чăнах та бойецсем тăшмансене штурмălарĕç, вĕсене хăйулăн тата пĕр каçарусăр аркатса тăкрĕç. Çапăçура хăйсем геройла командирсем пулнине лейтенантсем Христолюбăвпа Терешкин та кăтартрĕç.Аманнă пулин те вĕсем çапăçу операцийĕсене мĕн йулашки вăхăтченех йертсе пычĕç".

„Тăшмансене кайала чактарма ĕçе татăклăн тума кирлĕ пулнă,—тесе каласа кăтартать лейтенант С. Христолюбăв, пĕр каçах пилĕк хутчен аманнăскер.

Пулеметчиксемпе стрелоксене епĕ „огонь" командă патăм. Епĕр: „Сталин йулташшăн" „Сталинла Конституцишĕн!", „Тăван çĕршывшăн", „Урра!"—тесе хыттăн кăшкăрса малала ыткăнтăмăр. Хамăрăн йуратнă çулпуçăмăр тата тăван çĕршыва хĕрÿлĕн йуратни пире чĕрĕ вăй парса тăчĕç. Чăнах та, вăл вăхăтра çав туйăмпа тулнăскерсем, хамăр тăрăхупа епĕр чăннипех те хăрушă пулнă, мĕншĕн тесен тăшман анра-сухра пулса кайала чакрĕ. Çакна епĕр лайăххăнах курса тăтăмăр тата Йапонин 400 салтакĕ хăйсен офицерĕсемпе пĕрле советăн 70 часовойĕ хĕснипе кайала чакнине питех те йурăхла тесе шутларăмăр".

„Çĕрлехи шăплăхра командирăн çирĕп сасси илтĕнсе кайрĕ: „Сталин йулташшăн, малала!" Бойецсем ыткăнчĕç малала, красноармейĕцла „урра" йантраса кайрĕ. Тытăçу питĕ те хăйар пулчĕ. Отделени командирĕ Николай Шишлов Йапони офицерĕпе тытăçрĕ. Тăшман совет патриочĕ çине револьвĕрпе тĕллерĕ, анчах Шишлов хăраса ÿкмерĕ. Вăл хăйĕн сулахай аллипе тăшман аллинчен йарса илсе, ăна чышкăпа çапса ÿкерчĕ те револьвĕрне туртса илчĕ. тăшмана персе вĕлерчĕ. Шишловпа йунашарах йапонĕцсемпе Спесивцĕв подразделенинчи комсомол организатăрĕ çапăçать. Тăшман гранатометчикĕ гранатă парахма хатĕрленсе тăнă, анчах Спесивцĕв унтан та васкаварах пулчĕ; комсомолĕцăн штыкĕ тăшман кĕлеткине кĕрсе кайнă, Спесивцĕв çавăнтах темиçе бойецпа Йапони салтакĕсен çĕнĕ ушкăнне пĕтерсе тăкать". (167 стр).

„Малала, тăшмана хирĕç!"—çак сăмахсем кашни бойецăн çăварĕнчен тухнă. Йăвăр аманнисем те çак сăмахсемпех вилнĕ.

Судет облӑҫӗнчи халӑхсем Германи фашисӗсем пырас умӗн Чехословакине ӑшнеле шалала тарассӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: беженцӑсем Прагӑра.

(„Прессклише").

Йапони захватчикӗсен вӑйӗсем чакса пыраҫҫӗ

Уинстон Черчилљ Йапонин Китайа хирӗҫле вӑрҫи малашне мӗнле пуласси ҫинчен

Англири палла политикӑлӑ деятелӗ Уинстон Черчилљ Францири хаҫатсенчен пӗринче статйа пичетлесе кӑларнӑ, вӑл статйара Йапонин Китайа хирӗҫ пыракан вӑрҫи малашне мӗнле пуласси ҫинчен калать.

— Вӑрҫа 30 уйӑх пынӑ хыҫҫӑн,—тенӗ статйара, — Йапони ҫарӗсем Китай ҫӗрӗ ҫине нумай шалала кӗчӗҫ. Вӗсем Китай территорин виҫӗ пайӗнчен пӗр пайӗ ҫинче чукунҫулсемпе шыв ҫулӗсен хуҫисем пулса тӑчӗҫ. Анчах фронт линин тепӗр йенче китайӗцсем ҫӗр мӗлйун ҫын ытла пурӑнаҫҫӗ, вӗсене йапонӗцсем парӑнтарайман.

Йапони Китайра тытса тӑракан 750 пин салтак чукунҫулсем тӑрӑх кусса ҫӳреме пултарнӑ, анчах вӗсем ҫӗршыва парӑнтарма пултараймаҫҫӗ. Ҫӗршывӑн вунӑ пайӗнчен тӑхӑр пайӗ—халӗ те Китай администрацин аллинче, вӑл Китайӑн центр правителствине пӑхӑнса тӑрать. Парӑнтарнӑ текен районсенчи ҫӗршер хуласемпе йалсене нихҫан та Йапони салтакӗн ури пырса пусман. Апла пулсан та вӗсем ҫӗршыв ӳменче мӗнле хӑрушлӑх тӑнине пит лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Унти халӑх партизансене апат-ҫимӗҫ тата хӳтлӗх парса тӑрать.

Китай ҫарӗ хӑйне тӑшман хупӑрласа илме пултаракан, хӑйӗн чӗрӗ вӑйӗ пӗтме пултаракан вырӑнсенчен пит чейӗн те аслӑн тухма пултарнине кӑтартса пачӗ. Вӑрҫӑна Китайӑн пит те анлӑ территорийӗсем ҫинче шалала иксе кӗни Китай ҫӗнтерес шанчӑка ӳстерет. [illegible] хи вӑхӑтра Китайра тепӗр хут тӑваҫҫӗ пулас. Китай питӗ те пысӑк, унти халӑх шучӗ те пит пысӑк. Ҫапӑҫа-ҫапӑҫа кайала чакса пыракан ҫарсем тата ытларах вӑйланса, ҫирӗпленсе пыраҫҫӗ.

Китайри вӑрҫӑ ытларан та ытларах вӑрӑма чӑсӑлса пынӑ май, Йапони захватчикӗсен вӑйӗсем чакса пыраҫҫӗ. Мӗлйун ытла ҫынлӑ ҫар тытса тӑни ҫӗршыв хуҫалӑхне йавӑррӑн пусарса тӑрать. Йапони халӑхӗ налогсен йӑварлӑхӗ айӗнче аваннать. Вӑрҫӑна малалах илсе пырас тесен, Йапони пысӑк тинӗс флочӗ тунипе пӗрлех, ҫар промышлӗннӑҫе валљи йут ҫӗршывсенчен пит нумай чӗртавар кӳрсе пырас пулать.

Йулашкинчен Черчилљ: Китай хӑйӗн пурнӑҫне сыхласа хӑварассишӗн кӗрешет, тесе палла тӑвать. Китай парӑнни Англине, Францине тата Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсене пит пысӑк сийен кӳнӗ пулӗччӗ.

(ТАСС).

Столовӑйсенчи ҫитменлӗхсем

Шӑхасан йалповӗн район центрӗнчи столовӑйри ҫитменлӗхсем ҫинчен хаҫатсем ҫинче сахал мар ҫырнӑ, сахал мар пукусенче калаҫнӑ, ҫапах та унти ҫитменлӗхсене халӗ те пӗтермеҫҫӗ-ха. Столовӑйне кӳлленех районри служӑшчисем, колхозниксем нумайӑн апатланма кӗреҫҫӗ. Анчах столовӑйӗнче [illegible] Шӑхасанта пасар пулнӑ кун, пасара килнӗ колхозниксене апатланма апатсем ҫитмеҫҫӗ. Менӳра 10—12 тӗрлӗ апат ҫырса тултарнӑ, анчах столовӑйӗнче вӑл апатсене курма ҫук.

Столовӑйӗнче ҫимели йапаласемсӗр пуҫне ӗҫмелисем: сӑра, квас, морс та пур. Анчах вӗсене ӗҫме столовӑйӗнче стакансем ҫитмеҫҫӗ. Кружкӑсем те ҫук. Ҫавна пула столовӑйӗнче кофе, компот тата чей те вӗретмеҫҫӗ. Столовӑйӗнче ӗҫлекенсем кӑмӑлсем те тирпейсӗрлӗхпе шыв ӗҫеҫҫӗ.

Столовӑй пуҫлӑхӗ Журављов тата йалпо председателӗ Гаврилӑв вӑл ҫитменлӗхсене пӗтерессишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ.

Дм. Иванов.

Мӗншӗн столовӑйа хупнӑ

Иванӑвӑри кирпӗч савӑтӗнче рабочисем ҫулла та хӗлле те ӗҫлеҫҫӗ. Кунта Тӗкӗрҫ йалповӗ ҫулсеренех ҫуллахи вӑхӑтра рабочисем валљи столовӑй уҫать. Анчах хӗлле пулсан темӗншӗн столовӑйне хупаҫҫӗ. Кӑҫал та кунта ҫуллахи вӑхӑтра столовӑй ӗҫленӗ, анчах халӗ столовӑйне хупрӗҫ. Столовӑй ҫук пирки рабочисемпе служӑшчисен кашни кунах килне кайма тивет. Столовӑйӗнче вӗри чей те ҫук. Ҫавӑн пекех лавкара та ҫимели йапаласем сахал сутаҫҫӗ. Час-часах шур ҫӑкӑр та пулмасть. Иртнӗ ҫулсенче лавкара тӗрлӗрен пахча-ҫимӗҫсем: купӑста, сухан, хӑйар сутассине йӗркеленӗччӗ, кӑҫал ӑна та сутмаҫҫӗ.

Савӑтри рабочисем Тӗкӗрҫ йалповӗнчен хупнӑ столовӑйне халех уҫма, тата йалпо лавкинче апат-ҫимӗҫсемпе куллен кирлӗ таварсене илсе пырса сутассине йӗркелеме ыйтаҫҫӗ.

А. Иванов.

Колхоз—оборонӑ крепӑҫӗ

„Заветы Ильича" колхозра (Нариман районӗ, Сталинград облӑҫӗ) оборонӑ ӗҫне лайӑх йӗркеленӗ. Хӗрлӗ Ҫартан таврӑннӑ красноармейӗцсем тата осоавиахим курсӗсенчен вӗренсе тухнӑ ҫынсем оборонӑ кружокӗсене йертсе пыраҫҫӗ. Байбекӑв колхозник пӑшал перекенсен кружокне йертсе пырать. Вӑл йертсе пыракан кружок членӗсем 15 ҫын „Ворошиловский стрелок" значок нормисене панӑ. Хӗрлӗ Ҫартан таврӑннӑ красноармейӗц-комсомолӗц Абтрахманӑв ПВХО значокӗсене илме вунӑ ҫынна вӗрентсе хатӗрленӗ. Бабаљйазӑв комсомолӗц йертсе пынипе 60 ҫын ГСО значокӗсене илнӗ.

Нумай пулмасть колхозра сывлӑшри химилӗ тапӑнуран мӗнле сыхланмалине вӗреннӗ. Хаљ тата тактикӑлӑ пысӑк вӑйӑ иртерме хатӗрленеҫҫӗ.

(ТАСС).

Сталинла Конституци кунӗ йачӗпе пыракан социалисӑмлӑ ӑмӑрту

Мускаври „Манометр" савӑт коллективӗ пӗтӗм халӑх уйавне—Сталинла Конституци кунне—кӗтсе илме пысӑк ҫӗкленӳпе хатӗрленсе пырать.

Савӑтра 800 стаханӑвӗц ытла хӑйсен ӗҫ нормине ытлашшипех тултарса, ӗҫ ҫине социалисӑмла пӑхнин паха тӗслӗхӗсене кӑтартаҫҫӗ.

Инструментсен цехӗнче стаханӑвла ӗҫ метӑчӗсен шкулне уҫнӑ. Вӑл шкула савӑтри чи лайӑх стаханӑвӗц Бочаров йулташ йертсе пырать.

Социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва савӑтри интеллигенци те активлӑн хутшӑннӑ. Инженерсем тата техниксем производствӑра рационализацисем тӑваҫҫӗ тата йулса пыракан участкӑсене мала тухма пулӑшаҫҫӗ.

(ТАСС).

Колхозсенчи йӗлтӗр станцисем

Куйбышӗв облӑҫӗнчи район центрӗсенче тата пысӑк колхозсенче пуринче те йӗлтӗр станцисем организацилеҫҫӗ. „Путь Ленина" колхоз (Кинељ-Черкас районӗ) 150 мӑшӑр йӗлтӗр туйаннӑ тата каток валљи площадкӑ тасатса хунӑ.

Районсене пилӗк пин мӑшӑр ботинкӑпа конљкисем тата ҫирӗм пилӗк пин мӑшӑр йӗлтӗр йарса параҫҫӗ.

Декабӗр уйӑхӗнче районсенче колхозсенчи физкуљтурӑ организатӑрӗсен семинарӗсене туса ирттереҫҫӗ.

(ТАСС).

Пур колхозсенче те таварлӑ фермӑсем

Кӑҫал кӑнтӑр Казахстанри колхозсенче ҫӗнӗрен 309 таварлӑ фермӑ организациленӗ. Вӑл фермӑсенче пурӗ 25 пин пуҫ шултра тата вак вылљӑхсем шутланаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ облӑҫра таварлӑ фермӑсӑр колхоз пӗрре те ҫук.

(ТАСС).

Перекет кассисен шучӗ ӳссе пырать

1937 ҫулти октйабӗрпе 1938 ҫулти октйабӗр хушшинче перекет кассисене хуракан укҫа хисепӗ Союзӗпе 1.400 мӗлйун тенкӗ ӳснӗ.

Кӑҫал 9 уйӑх хушшинче кӑна пирӗн ҫӗршывра ҫӗнӗрен 2.650 перекет касси тата 3.720 агентствӑ уҫнӑ.

(ТАСС).

Йапони авиацин тискер ӗҫӗсем

Китайра вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Йапони самољочӗсем Китайри мирлӗ пурнакан хуласем ҫине 3.318 хут пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем тивнипе 29.938 ҫын вилнӗ тата 37 пин ҫын ытла аманнӑ. Пуринчен ытла Гуандун провинци ҫине нумайрах пыра-пыра бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫак провинцин 38 пункчӗ ҫине пурӗ 1.297 хут пырса бомбӑсем пӑрахнӑ.

(ТАСС).

Йапони командовани прӗдставителӗ калани

ЧУНЦИН, нойабӗрӗн 20-мӗш. Иут ҫӗршывсен Ханљкоури ӗҫе лайӑх пӗлекен ҫыннисем пӗлтернӗ тӑрӑх, Йапони командовани представителӗ ҫапла каланӑ: Ухаљ районӗнче (Ханљкоу, Ханљйан, Учан хулисем) Йапони командованине итлесе пӑхӑнса тӑракан „правителства" тума май ҫук, ҫавӑнпа та виҫӗ хулара влаҫа Йапони командованийӗ аллинчех хӑварма йышӑннӑ, тенӗ.

(ТАСС).

СОВЕТ МУЗЫКИН ВУНӐКУНЛӐХӖСЕМ

* Кийӗвра пуҫланнӑ вунӑкунлӑх программинче тӗрлӗрен интереслӗ номӗрсем пур. Пӗрремӗш концертра тухса вылљанӑ композитӑр-орденоносӗц Ревуцкий йулташӑн иккӗмӗш симфонине Украинӑ халӑх мотивӗ тӑрӑх тунӑ.

Данкевич композитӑрӑн „Отелло" йатлӑ симфонилӗ поеми пысӑк ӑнӑҫлӑхпа иртнӗ.

* Калининра совет музыкин вунӑкунлӑхӗ пуҫланнӑ. Калинин станцинчи депон хӗрлӗ кӗтесӗнче Калининри филармони ансамблӗн лекци—концертне 150 рабочи итленӗ.

* Бакура совет музыкин вунӑкунлӑхӗ Азербайджан композитӑрӗсен творчӗстви йачӗпе уҫӑлнӑ. Симфонилӗ тата камерлӑ концертсем пурӗ 9 пулаҫҫӗ. Унта Шостакович, Егиазарӑв, Хачатурйан, Баланчивадзе, Дзержинский, Асафйӗв, Штейнберг т. ыт. произведенийӗсем пулаҫҫӗ.

(ТАСС).

Пӗтӗм тӗнчери шахмӑт турнирӗ

Нойабӗрӗн 19-мӗшӗнче Голландири пӗр пӗчӗк хулара, Арнгемра, пӗтӗм тӗнчери шахмӑт турнирӗн тӑххӑрӗмӗш турӗ пулнӑ.

Тур пуҫланас умӗн, Капабланка ҫуралнин ҫак кун 50 ҫул тултарнине чысланӑ.

Тӗнче ексчемпионӗ Капабланка Алехинпа хура фигурӑсемпе вылљаса йӑвӑр положенине кӗрсе ӳкнӗ, хӑйӗн парттине выљљаса йанӑ.

Турнир лидӗрӗ Файн Ржешевскипе вылљакан партине тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ,—вӑй Ржешевски йенче.

Тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ партисене нойабӗрӗн 21-мӗшӗнче вылљаса пӗтереҫҫӗ. Вуннӑмӗш тур нойабӗрӗн 20-мӗшӗнче Бреда хулинче пулать.

★

Нойабӗрӗн 20-мӗшӗнче Бреда хулинче пӗтӗм тӗнчери шахмӑт турнирӗн вуннӑмӗш турӗ пулса иртнӗ. Шахматиссем пурте питӗ ҫине тӑрса кӗрешнӗ.

Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен чемпионӗ Ржешевский Ботвинникпа вылљанӑ. Пӗрремӗш хут вылљанӑ чух хӑйне совет гроссмейстӗрӗ ҫӗнтернӗшӗн вӑл халљ ӑна тавӑрасшӑн пулнӑ. Партине вылљаса пӗтереймен, анчах вӑл нихӑшӗ те ҫӗнтерменнипе пӗтет, тесе шутлама май пур.

Ейвепе Аљохин, Кереспа Флор пӗрне пӗри ҫӗнтереймен. Капабланкӑпа Файн та пӗрне пӗри ҫӗнтереймӗҫ, теме пулать.

Малта—халиччен хи пекех Файн тата Керес. Нойабӗрӗн 21-мӗшӗнче Амстердамра халиччен вылљаса пӗтермен партисене вылљаса пӗтереҫҫӗ. Ботвинникӑн Кереспа тата Ржешевскипе вылљаса пӗтермен икӗ парти пур.

(ТАСС).

Вӑрнар районӗнче вылљӑхсен йӑхӗ мӗнле пулмала

Нойабӗрӗн 15-мӗшӗнче, Вӑрнарта колхозсемпе йалсовет председӑтӗлӗсен тата вылљӑх-чӗрлӗх ферми заведуйӑщчисен пӗрлешӳлӗ канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Ҫав канашлура вылљӑхсене йӑхсем тӑрӑх районсене планлас тӗлӗшпе хатӗрленӗ государствӑ планӗн пройектне колхозсенче сӳтсе-йавнин итогне тунӑ. 26 колхозра государствӑ планӗн пройектне сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, 23 колхозра русско-рысистый йатлӑ лашасем, 2 колхозра йӑвӑр туртакан (тяжеловозы) йӑхлӑ лашасем ӗрчетме йышӑннӑ. 24 колхозра симментал, 2 колхозра красногорбатовски йӑхлӑ ӗнесем; 19 колхозра прекос, 5 колхозра романовски, 1 колхозра романовскипе прекос йӑхлӑ сурӑхсене ӗрчетме йышӑннӑ. Районра пур колхозсем те английски йӑхлӑ сыснасем ӗрчетме пулнӑ.

П. Йелкин.

Столовӑйӗнче стакансем ҫителӗксӗр

„Бољшевик" крахмал савӑтне ҫӗрулми леҫме пыракансем валљи Чатукассинчи йалпо (Трак р.) столовӑй уҫрӗ. Столовӑйӗнче йӗркесӗрлӗхсем нумай. Апат ҫиме кӗрсен чашӑк-тирӗксем ҫитмен пирки нумай кӗтсе лармала. Столовӑйӗнче стакансем ҫитмеҫҫӗ, пурӗ те 8 стакан ҫеҫ. Пӗр стакан чей ӗҫес пулсан та кунта пӗр сехет ытла кӗтсе ларма тивет.

Йалпо лавка уйрӑмӗнче те государствӑна ҫӗрулми пама пыракансем валљи кирлӗ услови туса паман. Лавка 10—11 сехет ҫитсен те хупӑ тӑрать, лавкара куллен кирлӗ таварсене сахал сутаҫҫӗ.

И. Дубровин.

Шкулсем валљи вутӑ ҫителӗклӗ хатӗрлемеле

Хӗле кӗтӗмӗр. Анчах республикӑри чылай шкулсем валљи вутӑ ҫителӗклӗ хатӗрлесе хуман, хӑшпӗр ҫӗрте тата пачах вутӑсӑр ларакан шкулсем те пур.

Редакцине килекен ҫырусем кун пирки акӑ мӗн калаҫҫӗ:

„Иуманай (Ҫӗмӗрле р.) йалсовечӗ вӗренекен ачасем валљи шкулта кирлӗ условисем туса парасси ҫинчен маннӑ. Вӑл ҫак тарана ҫитсе те шкул валљи вутӑ турттарас тӗлӗшпе нимӗн те туман.

Хӑшпӗр чухне Тарӑн Ҫырмапа Уйпуҫ шкулӗсенче сивӗ пирки кунне ик-виҫ урок ҫеҫ туса иртереҫҫӗ. Кун ҫинчен учителсем нумай калаҫаҫҫӗ. Ҫапах та йалсовет председателӗ вырӑнтан та хускалмасть-ха," тесе ҫырать Г. Давыдӑв корреспондент.

Турхан районӗнчи Йӳҫ-Шӑхаљ йалсовечӗ те шкулсем валљи вутӑ хатӗрлес ӗҫе тытӑнман. М. Полетайӗв корреспондент ҫапла пӗлтерет: „Йӳҫ-Шӑхаљ йалсоветне пурӗ виҫӗ йал кӗрет. Ку йалсенче кашнинчех шкулсем пур. Анчах шкулсенче пӗринче те хӗлле валљи вутӑ хатӗрлемен".

Ҫавнашкалах „Пысӑк Йенљкассинчи (Вӑрмар р.) вӑтам шкулӑн та хутма вутӑ ҫук. Ачасем сивӗ класенче вӗренсе лараҫҫӗ. Шкул директӑрӗ пулнӑ Г. Йакӑвлӗв ҫулахи вӑхӑтра вутӑ хатӗрлес тесе тӑрӑшман.

Ҫӗнӗ директӑр Краснов вутӑ турттарас пирки „Трактӑр" колхоз правленийӗ ҫине ҫеҫ шанса пурӑнать. Ку тӗлӗшпе вӑл йалсовечӗпе тата йалсоветне кӗрекен ытти колхоз правленийӗсемпе ҫыхӑнса ӗҫлемест", тесе ҫырать Н. Петров корреспондент.

Ҫакӑн пек тӗслӗхсене татах та илсе кӑтартма пулать.

Шкулсем валљи вутӑ ҫителӗклӗ турттарса хатӗрлесси районсенчи совет органӗсен, йалсоветсемпе колхоз правленийӗсен пайан тумали ӗҫӗ.

Йалсовечӗсен, колхоз правленийӗсен ҫакна лайӑх асра тытмала: вӗсем шкулсене хӗлле валљи вутӑ хатӗрлесе памасӑр пӗтӗм вӗренӳ ӗҫне чарса параҫҫӗ. Кун пек йӑла пирӗн хушӑра пулмала мар.

— О —

261 пӑт тырӑ сутрӗҫ

Шупашкар районӗнчи „Кормилец" колхозри активиссем государствӑна 261 пӑт тырӑ сутрӗҫ. Ку ӗҫе колхозниксем хушшинче те анлӑн сарса йама пулчӗҫ.

И Андрейӗв.

Парти вӗрентӗвӗн тӗп ҫуртӗнче

Парти историне вӗренекенсене пулӑшас майпа, ПСК(б)П Обкомӗн парти вӗрентӗвӗн тӗп ҫурчӗ ыран, нойабӗрӗн 23-мӗшӗнче, Ленинӑн «Что делать?» йатлӑ кӗнеки ҫинчен лекци туса ирттерет.

Лекци каҫхине 7 сехетре пуҫланать.

Парти вӗрентӗвӗн тӗп ҫурчӗ.

Ответлӑ редактӑр Н. М. ҪЕМЕНАВ.

„ЧӐВАШПРОМПОЛИГРАФ"
ТИПОГРАФИНЕ КИРЛӖ:
НАБОРЩЧИК-МЕЛОЧНИКСЕМ
ТАТА
ПЕЧАТНИКСЕМ
Адрес: Шупашкар хули, Плеханӑв урамӗ, 31
3—2

Чӑвашкинотреста
СТАТИСТИК
тата КИНОРАБОТНИКСЕН СОЙУЗӖН ОБКОМНЕ
БУХГАЛТӖР
кирлӗ
Заљати вӑхӑтӗнче ҫак адрӗспе ыйтса пӗлмеле: г. Чебоксары, ул. Р. Люксембург, д. № 10, фотография.

Йӗпреҫри „Спотара" савӑтне хозрасчотлӑ йединицӑсем валљи
КИРЛӖ:
I. ЙӖПРЕҪ СТАНЦИНЧЕ
1. Районри „Спотара" кантур управљайущчийӗ.
2. Аслӑ бухгалтӗр.
3. Бухгалтӗр.
4. Счетовод-кассир.
5. Катка-пичке маҫтерскойӗн заведуйущчийӗ.
II. „СПОТАРА" ВӐРМАН САВАТӖНЧЕ
1. Вӑрман касса хатӗрленӗ ҫӗрте заведуйущчи.
2. Аслӑ бухгалтӗр.
3. 2 бухгалтӗр.
4. Кассир тата счетовод.
5. Економист-финансист.
6. Вӑрман касса хатӗрленӗ ҫӗрте 2 деҫатник.
7. Хӑйсен лашисемпе турттаракансем (сезонлӑха).
8. Автотранспӑрт заведуйущчийӗ.
9. Гужтранспӑрт заведуйущчийӗ.
10. Савӑт лашисемпе турттаракансем.
11. Машиниссем.
12. Слесӑрсем.
13. Токӑрсем.
14. Станочниксем.
Ҫак адрӗспе ыйтса пӗлмеле:
г. Чебоксары, Красноармейская 5, „Спотара", Йӗпреҫ, завод „Спотара".

Уполномоченнӑй Чувашглавлита № 666. Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 982 ф. б. 54×84 п. л.